21-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
МАРТ
8
ШАМАТКУН
56 (5771) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Совет хĕрарăмĕсем

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен коммунистла кунне—мартăн 8-мĕшне — Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем хаваслăн уявласа ирттерĕççĕ. Çак кун социализмлă çĕршыври хĕрарăмсем, мĕнпур ĕççыннисемпе пĕрле, коммунистла парти тата аслă Сталин ертсе пынипе тунă пысăк сĕнтерӳсене пăхса тухаççĕ.

Пирĕн тăван çĕршыври хĕрарăмсем чаплă çула утса тухрĕç.

Совет власĕ хăйĕн пирвайхи кунĕсенчех закон тăрăх хĕрарăма арçынпа пĕртан правăсем пачĕ. Халĕ ĕнтĕ Совет Союзĕнче хĕрарăмсем закон тăрăх кăна мар, пурнăçра, чăннипех арçынпа пĕртан правăллă пулса тăчĕç. Хĕрарăмсем хуçалăхра, государство управлени ĕçĕнче, культурăллă, общественăллă-политикăллă ĕçсенче палăк вырăн йышăнчĕç.

Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче халăх хуçалăхĕнче ĕçлекен хĕрарăмсен—работницăсен тата служащисен хисепĕ виçĕ хут ытла ӳсрĕ. Колхозăлă строй—хресчен хĕрарăмне ĕнтĕркесе пурнассинчен хăтăлма, тинех этем пурнăçĕпе пурăнма çул уçса пачĕ.

Совет хĕрарăмĕсем пур ĕçре те пултаруллă та маттур ĕçлесе пыраççĕ. Вĕсенчен чи пултаруллисене çĕршыври государство власĕн органĕсене суйланă. СССР Верховный Совечĕн, союзлă тата автономлă республикăсен Верховный Совечĕсен депутачĕсен хисепĕнче хĕрарăмсем 1.707 çын. Совет Союзĕнчи вырăнти Советсен депутачĕсен хисепĕнче те хĕрарăмсем 500 пин çынна яхăн.

Наукăпа техника тата культура ĕçĕнче хĕрарăмсем ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ. Совет Союзĕнчи наукăпа тĕпчев институчĕсенче научнăй работниксем пулса ĕçлекен хĕрарăмсен хисепĕ 1940 çул вĕçĕ тĕлне 12 пин çынна çитнĕ. Хĕрарăмсем 100 пин çын ытла халăх хуçалăхĕнче инженерсем тата техниксем пулса ĕçлеççĕ.

Наципеллĕ республикăсенчи, çав хисеппех пирĕн чăваш республикинчи, хĕрарăмсен политикăллă, производствăллă тата культурăллă ӳсĕмĕ уйрăмах пысăк. Патша саманинче чура выраннче пулнă, тĕпел кукринчен тухса курман чăваш хĕрарăмĕ хальхи вăхăтра фабрикăсемпе заводсенче, колхоз производствинче, учрежденисенче, чугунçул çинче—пур ĕçре те хаваслă ĕçлет. Чăваш хĕрарăмĕ—инженер, техник, врач тата тĕрлĕрен пысăк квалификациллĕ работник пулса ĕçлет. Çакă вăл—коммунистла партипе совет власĕ тăрăшнипе тунă чи пысăк çитĕнӳсенчен пĕри.

Çĕнĕ союзлă республикăсенче те совет власĕ ирĕке кăларнă ĕçхĕрарăмĕсем çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ туса пыраççĕ. Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенче, Бессарабире, Çурçĕр Буковинăра, Литвара, Латвире тата Эстонире пиншер-пиншер ĕççынни хĕрарăмсем пур ĕçе те активлă хутшăнаççĕ. Нумай та пулмасть иртнĕ вăхăтра правăсăр пулнă, пусмăр тӳссе пурăннă хĕрарăмсем совет стройĕ вĕсене телейлĕ пурнăç тума çул уçса панине часах туйса илчĕç.

Совет Союзĕнче хĕрарăма ӳссе пыма, халăх хуçалăхĕн кирек хăш отраслинче те ĕçлеме мĕнпур условисене туса панă. Хуласенче, предприятисенче, колхозсенче столовăйсем нумайрах та нумайрах уçса пыни хĕрарăма кил ĕçĕнчен пушайма, производствăри ĕçе хутшăнма май парать. Çавăнпа малашне те пирĕн столовăйсен хисепне ӳстерсех пымалла.

Пирĕн çĕршывăн пур кĕтессисенче те ача амăшĕсен тата ачасен сывлăхне упракан учрежденисем ĕçлеççĕ. Пирĕн республикăра кашни хуларах тата 86 колхозра ача çуратмалли çуртсем, акушер пункчĕсем 75 уçнă тата больницăсем сумĕнче те ача çуратмалли отделенисем пур. Хĕрарăмсемпе ачасен сывлăхне упрама ятарласах уçнă консультацисем республикăра 29 консультаци ĕçлеççĕ. Яланах ĕçлекен ача яслисем 36 уçнă тата иртнĕ çуллахи вăхăтра 551 колхозра вăхăтлăх ача яслисем ĕçленĕ. Ача-пăча сачĕсен хисепĕ те пирĕн чылай.

Ача амăшĕсен тата ачасен сывлăхне упракан учрежденисем пирĕн çĕршывра малашне тата ытларах нумайланса пырĕç. Вĕсен хисепне ӳстерсе пырас тесе пирĕн вăя хурса тăрăшмалла. Ку ĕçе пурнăçа кĕртессишĕн Наркомздравпа Наркомпрос органĕсен кăна мар, профсоюз органĕсен, предприятисен руководителĕсен, кашни ялсовет исполкомĕн тата унăн председателĕн, кашни колхоз правленин тата унăн председателĕн тăрăшмалла.

Мартăн 8-мĕшне паллă туса, Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем тăван çĕршывăн хуçалăхлă хăватне тата унăн обороninе малалла тĕреклетме вăй пухаççĕ. Ку ĕçре совет хĕрарăмĕсене хисеплĕ вырăн панă. Медицина сестрисене, ветеринари ĕçне тата техника ĕçне вĕреннĕ хĕрарăмсене çар ретне илесси çинчен кăларнă закона совет патриотки-сем хĕпĕртесе йышăнса илчĕç. Белофинсене хирĕç кĕрешнĕ кунсенче аманнă красноармеецсене тата командирсене вĕсем тăван амăшĕсем вырăннех пулса пăхрĕç, фронта кайнă упăлкисен тата пиччĕшĕсемпе шăлнĕсен вырăнне тăрса, хĕрарăмсем производствăра ĕçлерĕç. Белофинсене хирĕç çапăнă çĕре хутшăннă нумай хĕрарăмсем совет правительствинчен пысăк наградăсем илчĕç.

Пирĕн социализмлă тăван çĕршывăн чиккисене вăйлă та хăватлă Хĕрлĕ Çар сыхласа тăрать. Анчах вăрçă хăрушлăхĕ çинчен пирĕн пĕр самантлăха та манмалла мар, халăхăн мобилизациллĕ хатĕрлĕхне, çĕршывăн пуянлăхне ӳстерсех пымалла. Уйрăмăн илсен, оборонăллă-массăллă организацисен — Осоавиахим тата РОКК организацисен—ĕçне тата ытларах вăйлатса, вĕсен ĕçне хĕрарăмсене ытларах хутшăнтарса пымалла.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ çĕршыв умне социализм строительствин çĕнĕ тата пит пысăк задачисене кăларса тăратрĕ. Çак задачăсене пурнăçа кĕртни—Совет Союзĕн хуçалăхĕ хăйне уйрăм хуçалăх пулса тăнине, вăл капитализмлă йĕритавралăхран килсе тăрас маррине тата ытларах çирĕплетет.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ СССР халăх хуçалăхĕн 1941 çулти планне ырларĕ тата çирĕплетрĕ. Çак плана тулларассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн совет граждăнĕсен кашниннех вăя хурса ĕçлемелле. Халăх хуçалăхĕн планне пурнăçа кĕртме ĕç дисциплинине малалла çирĕплетмелле, мĕнпур резервсемпе усă курмалла, çĕнĕ техникăна, ĕçĕн малта пыракан меточĕсене вĕренсе алла илмелле.

Фабрик-заводсенче, транспорт çинче тата промысла артелĕсенче ĕçлекен хĕрарăмсен пурин те партин XVIII конференцийĕ кăларса тăратнă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешес çĕрте малти вырăнта пулмалла. Çавăн пекех колхозницăсен те тырпул тухăçне, вылăх-чĕрлĕхсен хисепне тата вĕсен продуктивлăхне ӳстерессишĕн малашне тата активлăрах кĕрешсе пымалла.

Çĕршывăн политикăллă пурнăçне активлăн хутшăнипе тата производствăра ĕçленипе пĕрлех, пирĕн хĕрарăмсем çамрăк ăрува воспитани парас хисеплĕ ĕçе туса пыраççĕ. Хĕрарăмсем «пирĕн çĕршыври халăхăн çурпăнĕ пулса тăраççĕ, вĕсем пит пысăк ĕç çарĕ пулса тăраççĕ, вĕсен хамăрăн ачасене, çитĕнсе çитес ăрува, урăхла каласан, пирĕн малашлăха пăхса ӳстермелле» (Сталин).

Вĕсен, совет хĕрарăмĕсен, ачасене тăван çĕршыва, Ленин—Сталин партине пĕтĕм чĕререн юратакан туса пăхса ӳстермелле. Вĕсен сывлăхлă, культурăллă, дисциплинăллă, халăх ырлăхĕшĕн кĕрешнĕ чухне кирек мĕнле йывăрлăхсене те тӳссе ирттерме хатĕр тăракан граждансене, социализм çĕршывĕн нимĕнрен хăраман воинĕсене пăхса ӳстермелле.

Тĕнчере Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем кăна çакăн пек ирĕклĕ те телейлĕ пурăнаççĕ. Капитализмлă çĕршывсенчи ĕçхĕрарăмĕсем эксплоатацине пусмăр тӳсеççĕ, империализмлă вăрçăна пула вĕçĕмсĕр асапсемпе хĕнхурсем курса тертленеççĕ. Вĕсем кун пек асапа нимĕн шарламасăр тӳссе пурăнаççĕ теме çук, — ĕçхĕрарăмĕсем капитализмлă пусмăра хирĕç кĕрешме çĕкленсе пыраççĕ. Совет Союзĕнчи хĕрарăмсен ырă пурнăçĕ вĕсемшĕн çутă пример пулса тăрать.

Ленин—Сталин партийĕ хĕрарăмсем социализм строительствинче пысăкрах вырăн йышăнччăр тесе ывăнма цĕлмесĕр тăрăшать. Халăхсен аслă çулпуçĕ аслă Сталин ертсе пынипе, совет хĕрарăмĕсем малашне тата пысăкрах çĕнтерӳсем туса пырĕç.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Ялхуçалăхĕнче калама çук пысăк çитĕнӳсем тунăшăн тата уйрăмах ялхуçалăхĕнче тăн вырăн йышăнса тăракан ĕçсен планĕсене ирттерсе тултарнăшăн çаксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. **Алмакаев** Василий Егорович — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «День урожая» колхозри сад ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен звеньевой.

2. **Антонов** Дмитрий Антонович — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

3. **Акимов** Петр Иванович — Пăрачкав МТС комбайнерĕ.

4. **Антонов** Григорий Антонович — Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз бригадирĕ.

5. **Афанасьев** Матвей Афанасьевич—Советски районри «Майăн 1-мĕш» колхоз председателĕ.

6. **Азизов** Минулла Валиуллович — Чкаловски районри «Алга» колхозăн старший конюхĕ.

7. **Будылин** Василий Максимович — Çĕмĕрле райĕрĕç пайĕн старший зоотехникĕ.

8. **Вазикова** Фекла Михайловна — Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнга» колхоз свинарки.

9. **Воронцов** Василий Игнатьевич — Йĕпреç районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхоз утарĕн заведующийĕ.

10. **Гришин** Степан Алексеевич — Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри МТФ заведующийĕ.

11. **Гаязов** Абдулла Гаязович — Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ.

12. **Григорьев** Фома Григорьевич — Канаш МТС комбайнерĕ.

13. **Долгов** Владимир Николаевич — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Совет» колхоз председателĕ.

14. **Егоров** Мирон Федотович — Йĕпреç районĕнчи «Большевик» колхоз председателĕ.

15. **Елахов** Иван Григорьевич—Ишлей районĕнчи «Большевик» колхоз председателĕ.

16. **Еремеева** Наталия Еремеевна — Красноармейски районри «Хĕрлĕ Сормово» колхоз свинарки.

17. **Запольнова** Мария Павловна — Улатăр районĕнчи «Октябрь çĕнтерĕвĕ» колхозăн звеньевойĕ.

18. **Замахов** Иван Дмитриевич—Кувакино районĕнчи «12 лет Октября» колхоз садовочĕ.

19. **Захаров** Григорий Дмитриевич—Шăхасан МТС директорĕ пулнăскер, халĕ ВКП(б) Шăхасан райкомĕн секретарĕ.

20. **Земцов** Дмитрий Осипович — Чкаловски МТС-ри трактор бригадин бригадирĕ.

21. **Ионина** Ксения Матвеевна—Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри доярка.

22. **Иванов** Прокопий Иванович—Вăрнар районĕнчи «Колхозница» колхоз председателĕ.

23. **Иванов** Петр Иванович — Элĕк районĕнчи «Завет Ильича» колхоз бригадирĕ.

24. **Игнатьев** Федор Игнатьевич — Вăрнар МТС-чи машинозед.

25. **Илюшкин** Захар Михайлович — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Хурçă» колхозри СТФ заведующийĕ.

26. **Иванов** Герасим Иванович—Октябрьски районри «Красная Чувашия» колхозри хăмла лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадир.

27. **Иванов** Марк Иванович—Вăрнар районĕнчи «11 лет Чувашии» колхоз председателĕ.

28. **Краснов** Макар Васильевич — Комсомольски районри «Хĕрлĕ маяк» колхоз бригадирĕ.

29. **Каменский** Илья Петрович — Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз бригадирĕ.

30. **Конюков** Федор Михайлович — Октябрьски районри Киров ячĕпе тăракан колхоз фермисен заведующийĕ.

31. **Карзаков** Афанасий Ильич — Первомайски районри «Авангард» колхоз бригадирĕ.

32. **Корнилов** Степан Илларионович — Первомайски МТС трактористĕ.

33. **Кадеев** Павел Тимофеевич — Çĕмĕрле районĕнчи «Комбайн» колхозри пахча-çимĕç лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадир.

34. **Костяков** Егор Васильевич—Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат» колхоз председателĕ.

35. **Ктрин** Григорий Гаврилович — Комсомольски районри «Культура» колхозăн садсем ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадин бригадирĕ.

36. **Карпова** Федосия Константиновна — Йĕпреç МТС трактористки.

37. **Кривошеев** Иван Павлович—Кувакино районĕнчи «Хĕрлĕ партизан» колхоз бригадирĕ.

38. **Кадеров** Никита Федорович — Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат» колхозăн агротехникĕ.

39. **Левый** Арсений Сосипатрович — Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхоз председателĕ.

40. **Лукин** Василий Лукич — Етĕрне районĕнчи «Хĕрлĕ сухаç» колхоз конюхĕ.

41. **Лукин** Прокопий Миронович — Вăрнар райĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

42. **Львов** Тимофей Петрович — Комсомольски МТС-ри трактор бригадин бригадирĕ.

43. **Ларев** Аркадий Васильевич — Первомайски МТС трактористĕ.

44. **Моисеева** Пелагея Федоровна — Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри звеньевой.

45. **Мишаков** Борис Васильевич — Вăрнар районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз фермин заведующийĕ.

46. **Михайлов** Петр Николаевич — Йĕпреç МТС-чи старший механик.

47. **Мясников** Ефим Андреевич — Елчĕк МТС-чи трактор бригадин бригадирĕ.

48. **Мольков** Егор Герасимович — Етĕрне районĕнчи «Пионер» колхозри МТФ заведующийĕ.

49. **Малахеев** Георгий Тимофеевич — Вăрмар районĕнчи «Арапуç» колхоз председателĕ.

50. **Михайлова** Анна Михайловна — Вăрмар районĕнчи Старо-Шелкановри ăратлă сыснасен таварлă ферминчи свинарка.

51. **Михайлов** Егор Михайлович — Тăвай районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхозри пахча-çимĕç тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадир.

52. **Николаев** Иван Николаевич — Çĕрпӳ районĕнчи «Емĕт» колхоз бригадирĕ.

53. **Осипов** Петр Осипович — Вăрнар МТС-чи старший агроном пулнăскер, хальхи вăхăтра çав МТС директорĕ.

54. **Прохоров** Федор Федорович — Шăмăршă районĕнчи «Юлташ» колхозăн бригадирĕ.

55. **Павлов** Александр Павлович — Тăвай районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз свинарĕ.

56. **Ремизов** Виктор Фомич — Вăрнар МТС-чи старший механик.

57. **Рыбаков** Иван Тимофеевич — Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз председателĕ.

58. **Смирнов** Ефрем Гаврилович — Калинински районри Папанин ячĕпе тăракан колхозăн бригадирĕ.

59. **Свешников** Иван Евдокимович — Йĕпреç МТС-чи старший агроном пулнăскер, халĕ çав МТС директорĕ.

60. **Самонов** Николай Самонович — Калинински районри «Красноармеец» колхоз председателĕ.

61. **Северов** Василий Никифорович—Чкаловски МТС-ри трактор бригадин бригадирĕ.

62. **Синайкин** Леонтий Андреевич — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «День урожая» колхоз бригадирĕ.

63. **Тимофеев** Семен Тимофеевич — Шăхасан МТС-чи трактор бригадин бригадирĕ.

64. **Тапилин** Дмитрий Иванович — Улатăр райĕрĕç пайĕнчи старший ветврач.

65. **Тумарев** Михаил Филиппович — Улатăр районĕнчи «Хĕрлĕ партизан» колхоз председателĕ.

66. **Тукаева** Минета Минетулловна—Комсомольски МТС-ри трактор бригадин бригадирĕ.

67. **Федоров** Кирилл Федорович—Ишлей районĕнчи «Коммунист» колхозри МТФ заведующийĕ.

68. **Хабаров** Петр Семенович — Шупашкар районĕнчи «Осоавиахим» колхоз бригадирĕ.

69. **Храмкин** Николай Максимович — Вăрнар МТС директорĕ пулнăскер.

70. **Чернов** Николай Исакович — Шăхасан МТС трактористĕ.

71. **Шмикова** Пелагея Петровна — Вăрнар районĕнчи «Колхозница» колхозри махорка тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен звеньевой.

72. **Шишкин** Николай Иванович — Çĕрпӳ МТС трактористĕ.

73. **Шишкин** Николай Михайлович — Çĕрпӳ районĕнчи «Хĕрлĕ бригадир» колхозăн пахча-çимĕç лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадирĕ.

74. **Шмарина** Елизавета Ивановна — Етĕрне районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозри МТФ доярки.

75. **Цветкова** Анна Михайловна — Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри доярка.

76. **Яковлев** Никандр Яковлевич — Элĕк районĕнчи «Правда» колхозăн пăру пăхаканĕ.

77. **Яковлев** Николай Исакович — Йĕпреç МТС-чи трактор бригадин бригадирĕ.

78. **Яковлев** Василий Яковлевич — Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз бригадирĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
Г. ГУСЕВ.

Шупашкар хули,
1941 çулти мартăн 7-мĕш.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ—

МОЛОТОВ юлташа

Хаклă Вячеслав Михайлович!

Эпир, орденлă Чăваш республикин ялхуçалăхĕнчи малта пыракансен канашлăвне пухăннисем, Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсен тата мĕнпур ĕççыннисен ячĕпе, Сире, Сталин юлташăн чи шанчăклă тата чи çывăх соратникне, хăватлă Совет государствин Правительство пуçлăхне тата унăн тулашри политикин руководительне, хĕрӳллĕ салам яратпăр!

Пирĕн тăван çĕршывăн хуçалăхлă, политикăллă хăвачĕ тата унăн çар вăйĕн хăвачĕ ӳссе пыни, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн сталинла тулашри политики — эсир ертсе пынипе çирĕппĕн пурнăçа кĕрсе пыракан сталинла тулашри политика — совет халăхне хăйĕн тухăçлă ĕçне мирлĕ условисенче малалла туса пыма май пачĕç. Çакăн пек ĕçлесе пынипе Чăваш республикинчи колхозлă хресченсем, ССР Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисем пекех, 1940 çулта производствăра çĕнĕ çĕнтерӳсем турĕç.

Сине тăрса тата вăя хурса ĕçленипе, Ленин—Сталин партийĕ тата Совет правительстви ертсе пынипе, эпир хамăрăн уй-хирсенче тырпул тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе, колхозсенчи вылăх-чĕрлĕхсен хисепне тата вĕсен продуктивлăхне ӳстерес тĕлĕшпе чылаях çитĕнӳсем турăмăр. Колхозсене чеченклентерсе ӳстерессишĕн пыракан кĕрешӳре колхозлă ялхуçалăхĕн чаплă организаторĕсем çĕршерĕн тата пиншерĕн ӳссе çитĕнчĕç.

Анчах эпир, Молотов юлташ, пирĕн умра пит пысăк задачăсем тăнине те пĕлетпĕр. Эпир гектартан 100-шер пăт тырă туса илессишĕн, техникăллă культурăсен, ялхуçалăхĕнче тата ытти культурăсен тухăçне ӳстерессишĕн, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли тата вылăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне ӳстермелли плана тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн кĕрешсе пырăпăр.

Эпир Сире, Молотов юлташ, çакăн пек сăмах паратпăр: çитес çуракине, кăçалхи ытти мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене те кăтартуллă пурнăçа кĕртĕпĕр; колхозсен тата колхозниксен дохочĕсене тата ытларах ӳстерĕпĕр, государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене пĕтĕмĕшпех тата срокра тултарăпăр, çакăнпала хамăрăн социализмлă тăван çĕршывăн вăй-хăватне тата ытларах тĕреклетĕпĕр.

Сывă пултăр тата чечеклесе пытăр Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕнчи халăхсен ленинла-сталинла туслăхĕ!

Сывă пултăр Совет Правительствин пуçлăхĕ Молотов юлташ!

Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçĕ, пирĕн атте тата учитель Сталин юлташ!

ВКП(б) Центральный Комитечĕ —

А. АНДРЕЕВ юлташа

Хаклă Андрей Андреевич!

Орденлă Чăваш республикин ялхуçалăхĕнчи малта пыракансен канашлăне пухăннисем Сире, Сталин юлташăн шанчăклă соратникне, колхозла хĕрӳллĕ салам ярасçĕ.

ВКП(б) ленинла-сталинла Центральный Комитечĕ тата Совет Правительстви социализмлă ялхуçалăхне пĕрмаях хăпартса тата колхоз стройне пĕрмаях тĕреклетсе пыма панă ăслă кăтартусене асра тытса, Чăваш республикинчи колхозсем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, сталинла 8 миллиард пăт тĕштырă туса илессишĕн, колхозсен общественăллă хуçалăхне пур енпе те аталантарса пырассишĕн хавассăн кĕрешсе пыраççĕ.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче Чăваш республикинчи колхозлă хресченсем социализмлă çĕрĕçĕнче тата вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç. Çак çитĕнӳсене аслă Сталин колхозсемшĕн тата колхозниксемшĕн тăван ашшĕ пек тăрăшнине пула тунă. Эсир, хаклă Андрей Ачдреевич, хамăрăн тăван çĕршывăн ялхуçалăхне социализмла çĕнетес, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕнчи хресченсене коммунистла воспитани парас, историллĕ пит пысăк ĕçре пирĕн тăван Сталинăн çывăх помощникĕ пулса тăратăр. Эпир Сире, Андрей Андреевич, 1941 çулта колхоз производствинче çĕнĕ çĕнтерӳ, çĕнĕ çитĕнӳсем тума сăмах паратпăр.

Сывă пултăр ВКП(б) ленинла-сталинла Центральный Комитечĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата учитель, колхозлă хресченсен ашшĕ аслă Сталин!

Çĕнĕ яслĕсем, ача çуратмалли çуртсем, консультацисем

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери коммунистла кунĕ тĕлне çĕршыври чи лайăх хуласемпе рабочи поселоксенче ачасен çĕнĕ яслисем, ача çуратмалли çуртсем, хĕрарăмсемпе ачасен консультацийĕсем, сĕт кухнисем уçăлаççĕ. Хальхи вăхăтра ССР Союзĕнчи ача çуратмалли çуртсенче 145 пин койка ытла, яланах ĕçлекен ача яслисенче 900 пин вырăна яхăн шутланаççĕ. 1913 çулта çĕршывра ача çуратмалли койкăсем 6.824 койка, яслĕсенче 550 вырăн кăна пулнă. Хальхи вăхăтра сĕт кухнисем 2.200 кухня ытла, хĕрарăмсемпе ачасен консультацийĕсем 5.500 консультаци шутланаççĕ, çакă вăл пирĕн çĕршывра ачапа амăшĕн тăрăшнине питех те уçăн кăтартса парать.

Çакăн пек учрежденисене Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенче те чылай тунă ĕнтĕ. Кунта сĕт кухнисене кăна 90 кухняна яхăн уçнă. Хальхи вăхăтра Литвари хуласенчи ача çуратмалли çуртсенче 700 койка, Латвире 930 койка тата Эстонире 530 койка шутланать.

Хальхи вăхăтра ССР Союзĕнче хĕрарăм-врачсем 84 пин врача яхăн тата 70 пине яхăн акушерка ĕçлеççĕ. Юлашки 5 çул хушшинче акушеркăсен хисепĕ икĕ хут ытла ӳснĕ. (ТАСС).

ТАСС опровержений

Ютçĕршывсенчи хаçатсем: ССР Союзĕ Румынирен унăн Хура тинĕсри тинĕс-çар базисене Совет Союзне пама ыйтнă, текен сăмах сараççĕ.

Çавăн пек пĕлтернисем пуçран шухăшласа кăларнă киревсĕр сăмахсем пулса тăни çинчен опровержени пама ТАСС полномочи илнĕ.

Хĕрарăмсен Пĕтĕм-Тĕнчери Коммунистла кунĕ тĕлне «Искусство» издательстви кăларнă плакат репродукцийĕ. Корецкий художник тунă фото-монтаж.

Инçетри Сурçĕрти ялхуçалăхĕ вăйланса пырать

Совет ученăйĕсем ялхуçалăх культурисене Сурçĕрти Пăрлă океан çыранĕсем таранах сарса яма май пурринех кăтартса пачĕç. Хальхи вăхăтра Инçетри Сурçĕрте тĕрлĕ культурăсем 350 пин гектара яхăн çĕр йышăнса тăраççĕ. Кунта тĕштырăсен вăтам тухăçлăхĕ—гектартан 13—15 центнер, опытлă участоксенче 30 центнера çити пулать. Хăшпĕр районсем ялхуçалăх продуктисене урăх çĕртен илсе тăракан районсенчен вĕсене хăйсем туса кăларакан районсем пулса тăнă. Сăмахран, Турухан районĕнче пахча-çимĕçсен вăтам тухăçлăхĕ гектартан 130 центнер шутланать.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ

Михеев юлташ сăмахĕ

(Вăрнар районĕнчи Молотов юлташ ячĕпе тăракан колхоз председателĕ)

Юлташсем! 1940 çул колхозсене организацине хуçалăх тĕлĕнчен малалла тĕреклетсе пынă, вăйлă тырпулпа тата йышлă вильăх-чĕрлĕхпе кĕрешес ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тунă çулталăк пулса тăчĕ.

Пирĕн колхоз, ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата Сталин юлташ панă кăтартусене пурнăçа кĕртсе пырса, 1940 çулта колхозăн общественнăй хуçалăхăн пур енĕсене те анлăн сарса пырассишĕн, çĕрĕн кашни гектарĕпе анлăн усă курассишĕн кĕрешĕве вăйлăн сарса пычĕ. Çуракине, çум çумлассине тата уборкăна колхоз правительство кăтартса панă сроксенче пурнăçласа пычĕ.

Юлташсем! Пирĕн ĕç ăнăçлăхне хаклаканни—вăл тырпул тухăçĕ пулса тăрать. Вăйлă тырпул туса илессишĕн пирĕн колхоз Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхозпа ăмăртса çлерĕ. Бригадăсем тата звеносем пурте ăмăртăва хутшăннă.

Çакăн пек агротехникăллă ĕçсем туса ирттертĕмĕр. Стахановла шкултан 65 çын вĕрентсе кăларнă. Юлашки вунçĕ çул хушшинче уя 33.765 лав тислĕк кăларнă. Торф 78.898 тонна, кĕл 300 центнер, минерал удобренисем 983 центнер уя турттарнă пулнă. Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин опычĕсене анлăн пурнăçласа пыратпăр. Ăмăртса ĕçленипе колхоз иртнĕ çулта палла çитĕнӳсем турĕ.

Тĕштырăсем гектартан вăтам шутпа 19,67 центнер, çĕрулми 1000 пăт, 8 гектар çинче махорка вăтам шутпа гектартан 206 пăт, сĕлĕ 175 пăт, кĕрхи тулă 190 пăт, купăста 2.183 пăт, хăяр 1.634 пăт туса илнĕ.

Колхозăн юлашки çулсенче укçа тупăшĕ те нумай ӳсрĕ. 1940 çулта ĕçкунĕ пуçне 5 килограмм тĕштырă, 3 килограмм пахча-çимĕç тата 1 тенкĕ укçа панă. Иртнĕ çулта колхоз хăйĕн укçи-тенкипе 35 ача валли ялсĕ, пилĕк койка вырнаçмалăх ача çуратмалли çурт тата столовăй туса лартрĕ.

Колхозăн тупăшĕ ӳссе пынине унăн пайланман фончĕ хăпарни кăтартса парать. 1940 çулта пайланман фонд 37.781 тенкĕлĕх пулнă. Ку хисеп 1938—39 çулсенчи хисеппе танлаштарсан 200 процент шутланать.

Колхоз хуçалăхĕн ăнăçлăхĕ ĕçе организацилеме пĕлнинчен нумай килет. Колхозра ĕçе мĕн чухлĕ лайăхрах йĕркеленĕ, дисциплина мĕн чухлĕ çирĕпрех, ĕçĕн результачĕсем çавăн чухлĕ пысăкрах. 1940 çулта пирĕн кашни гектар çĕр пуçне 41 ĕçкунĕ тухнă. Çав вăхăтрах пирĕнпе юнашарти Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра пĕр гектар пуçне 80 ĕçкунĕ ытла тухнă. Çапла пулин те кунта тĕштырă гектартан вăтам шутпа 11 центнер кăна пухса кĕнĕ. Урăхла каласан, ĕçкунĕ икĕ хут ытларах кăларнă пулсан та тырпул тухăçĕ икĕ хута яхăн пĕчĕкрех.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата СССР Совнаркомĕ Украина ССР тăрăх тырпул тухăçне тата вильăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçкунĕ хушса парасси çинчен йышăннă постановлени—пур колхозсене те питех те кирлĕ, ăна пирĕн республикăра та пурнăçа кĕртсе пымалла тăвас пулать. Пирĕн колхозра 1940 çулта пĕрремĕш бригада гектартан вăтам шутпа 18,24 центнер илнĕ, иккĕмĕш бригада—20,3 центнер, виççĕмĕш бригада—19,49 центнер илнĕ. Пурĕ 12 звено ĕçленĕ. Вĕсен нумайĕшĕн тырпул тухăçĕсем пĕр пек мар: пĕрисем тырă сахалтарах, теприсем—нумайтарах илнĕ. Çав вăхăтрах ĕçкунĕ тăрăх тупăшсем вĕсене пĕр пекех валеççе панă.

Ĕç тăрăх тӳлемелли халлиллехи йĕрке—вăл малта пыракан колхозниксене хавхалантарса, ĕç хастарлăхне ӳстерсе пыма çитĕлĕклĕ пулăшман. Çĕнĕ постановлени—колхоз пурăнăçĕнче пысăк вăй пулса тăрать, кунта колхозникăн хăйĕн тата колхозăн интересĕсем пĕрле сыхăнса тăраççĕ.

1941 çул производство ĕçĕнчи çĕнĕ пысăк çĕкленӳпе пуçланчĕ. Партин XVIII конференцийĕ ячĕпе ăмăртса ĕçленипе, кăçал ку таринчен колхоз 6.408 лав торф, 3.987 лав тислĕк, 258 лав кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ уя турттарса кăларнă. Минерал çăнăхне пурĕ 1004 центнер кӳрсе килнĕ. Вăрлăхсем, ялхуçалăх машинисем пурте хатĕр. Яровизаци тума пӳлĕм хатĕрленĕ. Кăçал акмалли вăрлăха пĕтĕмпех яровизацилетпĕр. 1941 çулта эпир вăрлăха хĕреслĕ меслетпе акса хăваратпăр.

Пирĕн кăçал татах та пысăкрах результатсем илмелле. Эпир кăçал гектартан 150 пăт тĕштырă, ĕнерен 2000 литр сĕт, 100 сурăхран 120 путек илессишĕн кĕрешетпĕр. Вăл ĕмĕте эпир пурнăçа кĕртетпĕрех.

Сывă пултăр большевиксен партийĕ тата унăн çулпуçĕ Сталин юлташ! (Алă çупаççĕ).

Евдокимов юлташ сăмахĕ

(Чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцин директорĕ)

Юлташсем! Пирĕн республика правительстви Чăвашсен зоотехникăллă опытлă станци валли питĕ нумай укçа-тенкĕ парать. Чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцийĕ, малта пыракан зоотехника науки никĕсĕ çинче туса ирттернĕ опытсемпе Чăваш республикин условийĕсенче вильăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăвăрт ӳстерсе пыма çинĕ меслетсемпе çулсем тупрĕ. Зоотехникăллă станцăра наукăпа тĕпчев ĕçĕ 1933—1934 çулсенче пуçланса кайнă. Кирек мĕнле опытсемпе науканлла ĕçсем те, вĕсене наука енчен тĕплĕн никĕслесе парас тата ăна пурнăçа кĕртсе пырас пулсан, çав опытсем мĕнпур колхозсен тивĕçĕ пуличчен нумай вăхăт хушши тимлĕн ĕçлесе пыма ыйтаççĕ, вĕсем темиçе çул хушши тăсăлса пыраççĕ.

Зоотехникăллă опытлă станцин çитĕнĕвĕсене пĕр ӳстермесĕрех ялхуçалăхĕнче малта пыракансем умĕнче çакна калама пултаратăп: 6—7 çул хушши ĕçлесе опытлă станци, тĕпрен илсен, хăй умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртрĕ.

Çак çулсем хушшинче опытлă станци красно-горбатовски ăратлă майракаллă шултра вильăхсемпе тата шурă шултра английски ăратлă сыснасемпе ĕçлерĕ. Зоотехникăллă станци хăйĕн опычĕсемпе çакна тата тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ: красно-горбатовски ăрат пирĕн республика условийĕсенче чи лайăх, çирĕп ăрат. Наукăпа тĕпчев ĕçне анлăн туса пырса, красно-горбатовски ăрата лайăхлатса пырса опытлă станци кашни фуражлăй ĕнерен пĕр пин литр вырăнне виçĕ пин литр сĕт суса илме пуçларĕ. Эпир красно-горбатовски ăратăн чемпионне, «Песня» ĕнене пăхса ӳстертĕмĕр, унран 297 кун хушшинче 6809 килограмм сĕт суса илнĕ. Çак ăратшĕн ку показатель — чи пысăк показатель пулать.

Эпир сĕтре çу ытларах тата майракаллă шултра вильăхсен чĕрĕ виçине хăпартас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса ирттеретпĕр. Сăмахран, 1933 çулта пĕр чĕрĕ ĕнен виçи вăтам шутпа 328 килограмм тайнă пулсан, 1940 çулта чĕрĕ ĕнен виçи 444 килограмма çитнĕ, урăхла каласан, 35 процент ӳснĕ. Уйрăм ĕнесем 600 килограмм ытла талăçĕ.

Опытлă станци вильăх-чĕрлĕх фермисенчи работниксен ĕç тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе ĕçлерĕ. Пирĕн фермăри кашни работникăн ĕç тухăçлăхĕ кăçал 3,5 хут, доярккăсен ĕç тухăçлăхĕ 4 хут ӳсрĕ. Акă пĕр пример: доярка-стахановка Елена Шмель юлташ 14—16 ĕнерен пĕр кун хушшинче 200 литр сĕт суса илет. Колхоз фермисенчи хальхи пек ĕç тухăçлăхĕпе танлаштарсан, çакăн чухлĕ сĕт суса илме 4—5 доярка кирлĕ.

Кĕнекесем çинче çапла калана: красно-горбатовски ăратлă вăкăрсем чĕрĕлле 500 килограма çити тайма пултараççĕ тенĕ. Эпир çак цифрăна нумай ӳстертĕмĕр. Колхозсене сахал мар çамрăк вильăхсем паратпăр. Пирĕн станци колхозсене 200 вăкăр тата 100 ытла пăру пачĕ.

Сысна ĕрчетес тĕлĕшпе пирĕн показательсем çакăн пек: пĕр çултанăк хушшинче сысна амисене виçĕ хутчен çăвăрлаттарасси, е пĕр амаран çултанăкра 35—40 çăвăр илни, кашни амаран пĕрре çăвăрламасрен 20 çăвăр е татах та ытларах илни пирĕн опытлă станцишĕн халĕ ĕнтĕ çĕнĕ япала мар.

1939 çултан вара хамăр опытсене колхозсене куçарса пыратпăр. 1939 çулта эпир 4 колхозра, 1940—41 çулсенче 6 колхозра ĕçлетпĕр, вĕсене пулăшатпăр. Результатсем начар мар. Эпир хамăр ĕçе чылай районсенче — Улатăр, Куславкка, Çĕрпӳ районĕсенче туса пыратпăр.

Пирĕн опытлă станци тунă çĕнтерӳсене колхозсенче тума пултараççĕ-и, çук-и? Пултараççĕ, ăна «Ĕмĕт» колхозăн ĕçĕсем те аван кăтартса параççĕ.

Хăшпĕр чухне çакăн пек специалиста тĕл пулатăн: вăл наука халиччен кăтартса паман çĕнĕ япала шырать, çав вăхăтрах наука усса панă майсемпе усă курмасть, вĕсене вăл пĕлмест, пĕлесшĕн те мар. Малта пыракан наукăна пĕлмесен малалла каяймăн, вильăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе выраштан тапратайман. Çакăн çине çитĕлĕклĕ çăвăрăнса пăхмаççĕ.

Колхозниксем агротехникăна пĕлеççĕ, анчах зоотехникăна вара фермăсенче ĕçлекенсем кăна пĕлеççĕ, вĕсем те çитĕлĕксĕр пĕлеççĕ. Хăшпĕр чухне зоотехникăна колхозниксем кăна мар, колхоз председателĕсем те тĕплĕн пĕлмеççĕ. Çăвăнпа та зоотехника наукине пропагандăлас ĕçе лайăхлатас пулать.

Пурлăха перекетлес пулать

Металл—питĕ хаклă япаласенчен пĕри. Вăл пысăк йывăрлăхсемпе тупăнать. Метала перекетлессишĕн кĕрешесси — кашни рабочипе работницăн, производствăри кашни командирăн тивĕçĕ пулса тăмалла.

Партин XVIII конференцийĕ материаллă хаклăхсене: метала, электроэнергине, пĕр сăмахпа каласан, предприятисенчи мĕнпур пурлăха тирпейлĕн тытса усрасси çине, материалсене перекетлĕн расходласси çине ытларах çăвăрăнса пăхма хушса хăварчĕ. Анчах пирĕн заводра материалсене перекетлессишĕн тăрăшни паянхи кун та сисĕнмест-ха.

Технологиллĕ процеса пăснă пирки металла тирпейлĕн тытказаман пирки отходсем нумай пулаççĕ. Çав отходсемпе усă курма май пур. Çапах та усă курмаççĕ, ăна металлом вырăнне ӳрсе тиесе яраççĕ.

Нумаях пулмасть тимĕр цехĕнчи мастера—Дементьев юлташа тайкăсем касма задани панă пулнă. Ăна панă материалран вăл 1440 штука гайка хатĕрленĕ. Дементьев юлташ çав гайкăсене виçĕ хут ытларах хатĕрлеме пулнă, анчах металпа перекетлĕн усă курма пĕлмен пирки çав материалран 70 процент отход тухнă.

Пирĕн заводра шыв тата пăс хаклă япаласем. Çаксене перекетлессишĕн çине тăрса ĕçлемелле пек ĕнтĕ. Анчах хăшпĕр çынсемшĕн шыв та, пăс та ытлашши пек курăнать пулас. План отделĕ çирĕплетсе панă тăрăх рессорпа пружина цехĕн пĕр уйăх хушшинче 120 кубометр шыв тата 40 кубометр пăс расходламалла. Мĕн куратпăр-ха эпир? Кунта пружинăсемпе рессорсене хĕртмелли ваннăсен винтелĕсене хупмаççĕ, шыв купĕн-çĕрĕн ахалех юхать. Çавна пула пĕр кун хушшинче 5 кубометр вырăнне 100 кубометр шыв расходлаççĕ. Çапла ваканса уйăхлăха панă плана пĕр кун хушшинче расходласа пĕтереççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ шывшăн çак цех 75 тенкĕ тӳлес вырăнне, 1200 тенкĕ тӳлет.

Тӳрех калас пулать, хăшпĕр цехсен начальникĕсем производствăра технологиллĕ процеса пăхăнмаççĕ, пурлăха сая яраççĕ. Кун пек чухне, паллах, продукцин хăйне ларакан хакĕ чакмасть, вăл ӳссе пырать.

М. ВОЛКОВ.
Инженер-экономист, Канашри вагонсем юсакан завод.

ВЦСПС Президиумĕнче

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1941 çулта фабрикăпа завод ĕçне вĕренмелли шкулсенне государство ĕç вăйĕсен резервисене хатĕрлес тĕлĕшпе хушса тумалли мероприятисем çинчен» постановлени йышăннă май, вăрман промышленноçĕпе стройматериалсен промышленноçĕ валли массăллă-профессиллĕ рабочисем хатĕрлеме çĕнĕ ФЗО шкулĕсем организацилеççĕ.

ВЦСПС Президиумĕ лесопильнăй промышленноçпа йывăç каскалакан промышленноçри рабочисен союзĕсен мĕнпур Центральный Комитечĕсене, вăрман ĕçĕнчи тата йывăç юхтарас ĕçри рабочисен союзĕсен Центральный Комитечĕсене, çавăн пекех стройматериалсен промышленноçĕнчи рабочисен союзĕсен Центральный Комитечĕсене колхозри çамрăксене тата ялти ытти çамрăксене призыв (мобилизаци) йĕркипе фабрикăна завод ĕçне вĕренмелли шкулсене илме хатĕрленес тата призыва ирттерес ĕçре ĕççынни депутачĕсен Совечĕсене тата ĕç вăйĕсен резервисен управленийĕсене практикăллă пулăшу пама хушнă.

Профсоюз органĕсем шкулсем занятисене пуçлама хатĕрленсе çитнине, производство ĕçне вĕрентмелли площадкăсемпе ĕç вырăнĕсене, общежитисемпе столовăйсене мĕнле хатĕрленине тĕрĕслеме тивĕçлĕ. Призыв пункчĕсенче, общежитисенче тата профсоюзсен клубĕсенче призыв йĕркипе вĕренме илекен çамрăксем хушшинче культурăллă-политикăллă ĕçсем организацилемелле.

Чугунçулсем çинчи рабочисен союзĕсен пĕтĕм Центральный Комитечĕсем призыв йĕркипе илекен çамрăксене лартса кайма эшелонсене мĕнле хатĕрленине тĕрĕслес ĕçе организацилеме тивĕçлĕ. Пир-авăр промышленноçĕнчи рабочисен, йĕтĕн промышленноçĕнчи рабочисен, çăм промышленноçĕнчи рабочисен, çĕвĕ промышленноçĕнчи рабочисен тата атă-путмак промышленноçĕнчи рабочисен союзĕсен Центральный Комитечĕсем предприятисем пиравăр таврашне, выртса тăмалли хатĕрсене, тумтире, кĕпе-йĕме, урана тăхăнмаллисене вăхăтра хатĕрлес тата палăртса хунă сроксенче ярса парас ĕçре ĕç вăйĕсен резервисен управленийĕсене пулăшу пама тивĕçлĕ.

Государство суту-илĕвĕнчи работниксемпе общественнăй питани ĕçĕнчи работниксен союзĕсен Центральный Комитечĕсене, вĕренекенсене лайăх тăвантарса усрамалла тăвас тесе, столовăйсемпе буфетсен ĕçĕсене куллен-кунах массăллăн контроллесе тăрас ĕçе организацилеме хушнă.

ВЦСПС Президиумĕ çапла тума кирлĕ тесе йышăннă: вĕренекенсем хушшинче вĕренӳ пуçланнă пирвайхи кунсенчен тытăнсах вĕренӳпе производствăра çирĕп дисциплина, шкулсемпе производствăллă площадкăсем çинче кăтартуллă йĕркелĕх туса хурас ĕçре профсоюз органĕсем ФЗО шкулĕсен директорĕсене пулăшу памалла. Профсоюз организацийĕсем ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсем хушшинче культурăллă-массăллă тата воспитанилле ĕçе йĕркелесе яма тивĕçлĕ. Ку тĕлĕшпе профсоюзсен клубĕсемпе, стадионсемпе, спорт залĕсемпе, библиотекăсемпе лайăхрах усă курмалла, шкулсенче художествăллă пултарулăх кружокĕсем организацилемелле. Вĕренекенсене ĕçре, çавăн пекех общежитире тасалăхпа йĕркелĕх тытма хăнăхусем парас ĕç çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла.

(ТАСС).

МАРТĂН 7-мĕшĕнчи ИРХИ ЛАРУ

Мартăн 7-мĕшĕнчи ирхи ларăва Свешников юлташ уçать. В. Григорьев юлташ докладчĕ тăрăх тухса калама малтанах Федотов юлташ (сортоиспытанин госинспекцийĕ) сăмах илет. Ун хыçăн Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхоз агрономĕ Мартынов юлташ тухса каларĕ.

Мартынов юлташ, рекордлă тырпула уйрăм участок çинче çеç мар, колхозăн пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çинче вăйлă тырпул туса илес пулсан, агротехникăллă ĕçсене пурне те вăхăтра туса пыни кирлĕ, тесе калать. Вăрлăхсене малтанах лайăх хатĕрлесе тата тĕрĕслесе хуни, вырăнти удобренисемпе, тислĕкпе пĕлсе усă курни, çуракине çĕнĕ вăхăтра, кашни культурăна хăй вăхăтĕнче акса хăварни тырпул тухăçлăхне ӳстерет. Апла пулсан пирĕн ку ĕçсем çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхмалла.

— Ялхуçалăх специалисчĕсен колхоз производствине çывăхрах пулмалла,—тет Мартынов юлташ. — Халь ĕнтĕ пирĕн колхозсенче «хура ĕçсем» тума çеç мар, наукăпа тĕпчев ĕçне, опытлă ĕçсене анлăн сарса пыма май пур.

«Красное знамя» колхоз членĕ (Ишлей р.) Лебедев юлташ пахча-çимĕçсем лартса колхоз пысăк тупăш илни çинчен калать.

— Пирĕн колхоз, — тет вăл, — тĕштырă акса тунине пĕрлех пахча-çимĕç лартса хăйĕн тупăшне ӳстерсе пырать. Эпир çапла шутлатпăр: султа, хĕлле те пахча-çимĕç лартса ӳстермелле. Çакна пирĕн колхоз ĕçре пурнăçа кĕртсе пырать. Колхозăн теплица пур. Кăçал февраль уйăхĕнче 1800 килограмм симĕс сухан ӳстерсе сутрăмăр. Март уйăхĕнче татах 2000 килограмм симĕс сухан сутатпăр. Май уйăхĕнче хăяр тата помидор ниçсе ĕлкĕреççĕ.

Пирĕн районрах арбуз туса илме май пур. Пĕлтĕр эпир ку тĕлĕшпе опыт туса пăхрăмăр. Пĕр пĕчĕк опытлă участок пире 200 тенкĕ тупăш пачĕ. Кăçал арбуз ытларах акас тетпĕр.

Хуçалăха пур енĕпе те сарса пыни колхозăн укçа-тенкĕ тупăшне ӳстерет. Иртнĕ 1940 çулта пирĕн колхоз кашни ĕçкунĕ çине 1 тенкĕ те 10 пус укçан валеçрĕ. Кăçал 2 тенкĕ те 20 пус валеçме пăхса хунă.

— Эпир кăçал кашни ĕнерен 3000 литр сĕт суса илессишĕн кĕрешетпĕр, —тет Ворошилов ячĕпе тăракан (Çĕрпӳ р.) колхозри доярка Цветкова юлташ.

Пĕлтĕр вĕсем кашни ĕнерен 2.070 литр сĕт суса илнĕ.

Цветкова юлташ çамрăк пăрусене лайăх пăхни çинчен каласа панă. Вăл каланă тăрăх, фермăри çамрăк пăрусем пурте сывах, вĕсем талăкра 700—800 грамм хутшăнса пыраççĕ.

Малалла Самойлов юлташ (Калинински р.) сăмах илет.

— Пирĕн «Красноармеец» колхоз 1940 çулта гектартан 17,8 центнер тĕштырă туса илчĕ. Кăна эпир агротехникăллă ĕçсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пынипе çеç тума пултартăмăр. Вăрлăха яровизацилесе акни те тырă тухăçне чылай ӳстерчĕ.

Ваттисем каланă тăрăх, пирĕн енче вир акмăн пулнă. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ пирĕн колхоз пысăк тухăçлă вир туса илет. Иртнĕ çулта 4 гектар çĕр лаптăкĕ çинче 38,5-шер центнер вир туса илтĕмĕр. Кăçал пирĕн колхоз гектартан 150 пăт тĕштырă туса илессишĕн кĕрешет. Халь ку тĕлĕшпе пикенсе ĕçлетпĕр. Стахановла шкул ĕçлет. Шкулти вĕренĕве агротехника енĕпе хĕллехи вăхăтра тăвакан практикăлла ĕççемпе çыхăнтарса пыратпăр.

Самойлов юлташ ĕç нормисем çинчен каласа, Чăваш АССР Наркомземне хальхи вăхăтри ĕç нормисене çĕнĕрен пăхса тухма сĕнет.

— Мĕншĕн тесĕн, — тет вăл, — темиçе çул каярах тунă ĕç нормисем кивелчĕç, стахановла ĕç пысăкрах норма ыйтать.

Мордва АССР делегацин руководителĕ Арбузов юлташ ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕн участникĕсене саламлать. Унтан вăл Мордва республики Чăваш республикипе ăмăртса ĕçленипе иртнĕ çулта ялхуçалăхĕнче чылай пысăк çитĕнӳсем туни çинчен калать.

— Пирĕн республика, — тет Арбузов юлташ, — социализмлă ăмăртура кая юлчĕ, хăй çине илнĕ обязательствăна тултараймарĕ, тĕштырă туса илес тĕлĕшпе эпир сиртен каярах тăратпăр. Çакă ĕнтĕ пире малашне пикенерех ĕçлеме хушать.

Мари АССР делегацин руководителĕ Бурков юлташ хăйĕн сăмахĕнче вĕсен республики кăçал та Чăваш республикипе ăмăртма шухăшлани çинчен пĕлтерет.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташ машинно-тракторнăй станцисен ĕçĕсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Вăл уйрăм МТС-сен ĕçне критиклесе кăçал тумалли ĕçсем çинчен каларĕ.

Çаван пекех ирхи ларура Гришин (Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхоз), Малахеев (Вăрмар районĕнчи «Арапуç» колхоз председателĕ), Акимов (Пăрачкав МТС комбайнерĕ), Климанов (Кувакино районĕнчи «Пролетарий» колхоз), Лукин (Шупашкар р.), Петров (Тăвай МТС), Костяков (Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат» колхоз), Андреев (Сĕнтĕрвăри районĕнчи «Хĕрлĕ Çар» колхоз), Осипов (Вăрнар МТС), Ванюшкин (Хĕрлĕ Чутай р.), Пельщих (Чăвашсен Ялхуçалăх институтĕнчи профессор), Моисеев («Красное Сормово» колхоз, Сĕнтĕр р.) юлташсем тухса калаççĕ.

Канашлу участникĕсем Совет правительствин пуçлăхĕ Молотов юлташ патне саламлă сыру яма йышăнчĕç.

Çăкăнпа канашлăвăн ирхи ларăвĕ хупăнчĕ.

МАРТĂН 7-мĕшĕнчи КАÇХИ ЛАРУ

Каçхи ларăва ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ В. Чернов юлташ уçать. В. Григорьев юлташ докладчĕ тăрăх пренире тухса калама Ишлей районĕнчи «Большевик» колхоз председателĕ Елахов юлташ сăмах илет. Вăл хăй ертсе пыракан колхозăн иртнĕ çулхи ĕçĕсем çинчен тата колхоз кăçалхи çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен каласа парать.

Унтан ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ П. Чарыков юлташ сăмах илет. Чарыков юлташ хăйĕн сăмахĕнче ялхуçалăх енĕпе республика умĕнче тăракан ĕçсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Чернов юлташ Мари тата Мордва республикисемпе социализмлă ăмăртăва тухма сĕнӳ парать. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Н. Малов юлташ социализмлă договорăн проекчне вуласа парать. Кун хыçăн ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракансен канашлăвĕ çак ăмăрту договорне пĕр кăмăллă пулса йышăнать. Договор çине-ала пусма канашлу çынсем уйăрать.

Кун хыçăн канашлу Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксем, колхозницăсем, трактористсем тата трактористкăсем, комбайнерсем тата МТС работникĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем патне чĕнсе çырнă çырăва йышăнчĕ.

Канашлу участникĕсем ВКП(б) Центральный Комитечĕн секретарĕ А. А. Андреев юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕç.

Юлашкинчен, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ Г. Гусев юлташ ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене парса наградăласси çинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ каларнă Указа вуласа парать.

Канашлу председателĕ пулса ертсе пыракан В. Чернов юлташ кĕске сăмах каланă хыçăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕ хăйĕн ĕçне туса пĕтерчĕ.

И. И. Черевичный летчикăн Арктикăри вĕçевĕ

Мартăн 5-мĕшĕнче ирхине 4 моторлă «СССР Н-169» самолет навигаци уçăлас умĕн пăрсене сăнаса вĕренме разведкăллă вĕçеве тухса кайнă. Самолет Мускавран вĕççе тухнă, унăн пилочĕ — полярти паллă летчик-орденоносец И. И. Черевичный юлташ. Самолет экипажĕ умне çакăн пек задача лартнă: навигаци умĕн Арктикăн ингетри хĕвеланăçне хĕвелтухăç секторĕсенчи пăрсене, çак районсенче океанăн гидрологиллĕ режимне сăнаса вĕренмелле, магнитлă измерениесемпе метеорологиллĕ сăнавсем тумалла.

Самолет экипажĕн Арктика условийĕсенче ĕçлеме мĕн кирли йăлтах пур. Сывлăш карапĕ çине тĕрлĕрен научнăй оборудовани илсе кайнă. Самолет экипажĕ научнăй сăнавсене çурçĕр тинĕс çулĕн Главнăй управленийĕн Арктика институчĕн директорĕ опытлă полярник-орденоносец Я. С. Либин юлташ ертсе пынипе туса ирттерет. Экипаж составĕнче — иккĕмĕш пилот М. М. Каминский юлташ, штурман Л. И. Аккуратов юлташ, бортрадист А. А. Макаров юлташ, бортмеханик-сем — Д. П. Шекуров, В. Н. Барукин, А. В. Дурманенко юлташсем, Арктика институчĕн научнăй работникĕсем — магнитолог-астроном М. Е. Острекин юлташ тата гидролог Н. Т. Черниковский юлташ.

«СССР Н-169» самолета инçетри Арктика çулне ăсатса яма аэродром çине çаксем пынă: Çурçĕр тинĕс çулĕн СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнăй управленийĕн начальникĕ Совет Союзăн икĕ хут Геройĕ И. Д. Папанин юлташ, унăн заместителĕсем — Совет Союзăн Геройĕсем П. П. Ширшов тата М. И. Шевелев юлташсем, Главсевморпутьăн полярти авиаци управленийĕн начальникĕ Совет Союзăн Геройĕ И. П. Мазурук юлташ, Главсевморпутьăн Мускаври авиагруппин командирĕ Ф. М. Кузичкин юлташ, полярти паллă летчиксем.

Самолет вĕçсе çĕкленес умĕн Папанин юлташ самолет çине хăпарса ăна пăхса тухнă, экипажа чылай кăтартусем панă. (ТАСС).

АРХАНГЕЛЬСК, мартăн 6-мĕш. (ТАСС). Летчик Черевичный юлташ пăлан 7 сехет те 30 минутăра Архангельскран тухса, Байдаракская губа енне вĕçсе кайнă. 15 сехет те 50 минутăра «СССР Н-169» самолет Усть-Карăра чиперех анса ларнă.

Çанталăк лайăх пулсан, мартăн 7-мĕшĕнче Черевичный юлташ Желания мысне çити вĕçсе каять.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Мартăн 5-мĕшĕнче Албанири фронтра пысăк мар çапăçусем пулса иртнĕ. Итали çарĕн верховнăй командованнийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Итали самолечĕсем Лесбос утравĕ çинчи порт сооруженийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Фронтăн центральнăй тата çурçĕр участокĕсенче, тесе пĕлтерет Югославири «Време» хаçат, противниксем пĕр-пĕрин çине артиллерирен вăйлăн персе тăлă. Девол юханшывĕн айлăмĕнче Островице тăвăн районĕнче вăрçă ĕçĕсем хĕрӳллĕн пынă палăрнă. Тепелене районĕнче тата Клисураран çурçĕр енче пысăк мар отрядсем хушшинче çапăçусем пыраççĕ. Фронтăн çак секторĕнче итальянецсем грексене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Грексем Валона патнелле малалла кайма хăтланса пăхнă, анчах вĕсен ĕçĕ ăнăçсăр пулнă. Шкумба юханшывĕ пуçланакан вырăнта пĕр тапхăр лăпкă тăнă хыççăн иртех те пысăк активлăх палăрать. Итальянецсен Мокра тăвĕ çинчи йывăр артиллерийĕпе инçене перекен артиллерийĕ грексен Шкумба юханшывĕ пуçланакан вырăнти позицийĕсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ, тенĕ Германи сводкинче.

* * *

Çурçĕр Африкăра активлă çапăçусем пулман. Германи бомбардировщикĕсем, тенĕ Германи сводкинче, англичансен авиаци бази çине пырса тапăннă. Çавăн пекех çĕр çинчи тата сывлăшри разведка ĕçĕсем палăраççĕ.

Хĕвелтухăç Африкăра, Итали Сомалийĕнче, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англи войскисем малаллах наступлени туса пыраççĕ. Булобуртине туртса илнĕ хыççăн, Могадишоран тухса каякан пĕтĕм чугунçул англичансен аллине куçнă.

Итали сводкинче каланă тăрăх, Эритрейăри Керен секторĕнче ыран мартăн 5-мĕш тенĕ чух çĕрле англичансем Итали войскисем тăракан вырăна пырса кĕме хăтланнă, анчах вĕсен атакисене сирсе янă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Керена англичансем питех те хăвăрт туртса илессе кĕтме пулмасть. Керен гарнизонĕнче итальянецсен 2—3 дивизи (30 пин çынна яхăн) шутланать. Çутçанталăк условийĕсене кура Керен районне хӳтлеме лайăх, тата Керенран Асмарăна каймалли çул та итальянецсен аллинче.

Мартăн 4-мĕшĕнче Абиссинире партизансем Италин Буриэ фронтне туртса илнĕ (Судан чиккинчен 270 километрта). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Абиссини партизанĕсем Аддис-Абебăран 220 километрта тăраççĕ.

* * *

Англи фронтĕнче Англи авиацийĕн хăшпĕр активлăхĕ палăрать. Англи авиацийĕн министерстви кăларнă коммюникере каланă тăрăх, мартăн 5-мĕшĕнче Англи бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Булоньри доксем çине пырса тапăннă. Англи авиацийĕн ытти соединенийĕсем Ла-Манш районĕпе Çурçĕр Франципе тĕрлĕ операцисем туса ирттернĕ.

Германин разведка тăвакан самолечĕсем, тенĕ Германи командованнийĕн сводкинче, мартăн 5-мĕшĕнче Портсмутри çар сооруженийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Мартăн 6-мĕш. (ТАСС).

Англин Болгарине хирĕçле блокади

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин экономикăллă вăрçă министерстви çапла пĕлтернĕ: Англи правительствă Болгари территорине противник оккупациленĕ тесе шутлать. Çакна май, мартăн 5-мĕшĕнчен пуçласа, Англи блокади Болгарине те тивет. Болгарин мĕнпур таваррисене е Болгарăрен тухакан таваррисене йăлтах конфискацилемелле.

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин суту-илӳ министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Болгария противник оккупациленĕ территори пулса тăрать, унпа суту-илӳ тума май çук. Çавăнпа та Болгари территорийĕ çинчи мĕнле те пулин çынна коммерциллĕ çыхăнусемпе финанс çыхăнăвĕсем тытни преступленилле ĕç туни пулать, çавăн пек ĕçсемшĕн наказани памалла.

Таипе Индо-Китай хушшинчи калаçусем

ТОКИО, мартăн 6-мĕш. (ТАСС). Домэй Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Япони, Франци тата Таи пĕрле çырнă коммюникене пичетлесе кăларнă. Коммюникере çапла кăтартса панă: Таипе Индо-Китай хушшинчи чикăри конфликта йĕркелесе ярас тĕлĕшпе Япони хатĕрленĕ планăн тĕп пунктĕсем тăрăх Франципе Таи хушшинче килĕшӳ тунă.

Хĕрарăмсем—социализмлă обществăн активлă строителĕсем

Летчик-инструктор

Мария Тимофеевна Горохова юлташ летчик-инструктор пулса ĕçлет, — çамрăксене самолетпа вĕçме вĕрентет.

Хăй вăл виç-тăват çул каялла, хальхи вăхăтра хăй вĕрентекен çамрăксем пекех, авиаци ĕçне вĕренме тытăннă. Ĕç çакăнтан пуçланса кайнă: медсестрасен шкулĕнчен вĕренсе тухсан, час-часах унăн аэроклубра дежурнăй пулмалла килнĕ.

Пĕррехинче, вăл дежурнăйра тăнă вăхăтра, аэроклуб начальникĕ ăна самолетпа вĕçме чĕннĕ.

— Эпĕ сире самолетпа вĕçтерсе кăтартăп теннĕччĕ, астăватăр-и? — тенĕ вăл кулкаласа.

Маруся нумай шухăшласа тăмасть. Унăн самолет çине ларса вĕçсе курас шухăш тахçанах пулнă.

— Вĕçтерсен, вĕçетĕп,—тенĕ вăл хĕпĕртесе.

Вĕçсе пăхнă хыççăн унăн пуçне çакăн пек шухăш килсе кĕрет: «Эпĕ медсестра. Вăрçă пулас пулсассăн, сураннисене пулăшу пама каятăпах. Ун чухне вĕçме пĕлни пит пысăк усă пама пултарать. Аэроклуба вĕренме çӳресех пулать».

Килнĕ таврăнсассăн, хăйĕн шухăшне ашшĕпе амăшне каласа парать. Анчах ашшĕпе амăшĕ яхăна та килĕшмеççĕ.

Маруся çав кунхине самолетпа вĕçсе курни çинчен, унта нимĕнле хăрушлăх та çукки çинчен каласа парсан та, вĕсем çаврăнма шухăшламаççĕ Мĕн тăвас тетĕн? Атте-анне-çке-ха, пĕсен сăмахне итлемесен аван мар. Те пĕр енчен, унăн вĕренес килет.

1938 çулта Маруся Шупашкара ĕçлеме куçать, вĕçевĕç ĕçне вĕренес шухăш та ăна канăç памасть. Шупашкарта медсестрара ĕçленĕ вăхăтрах вăл аэроклуба вĕренме çӳрет. Лайăх тăрăшса вĕренет.

Хăй пĕччен самолетпа вĕçме вĕрентсен тин кун çинчен çырса пĕлтернĕ вăл ашшĕпе амăшне.

— Халĕ самолетпа хамах вĕçме пултаратăп,—тенĕ вăл çырăвĕнче. Унтан тата парашютпа икĕ хут сикни çинчен те çырса пĕлтернĕ...

Кăçалхи январь уйăхĕнчен пуçласа, Мария Горохова юлташ аэроклубра инструкторта тăрăшса ĕçлет.

— Партипе правительство задани парсан, ăна вăхăтра та çирĕппĕн пурнăçлама яланах хатĕр тăратăп, —тет Горохова юлташ.

Я-н.

Цех начальникĕ

Пĕчĕк фабрикăра ĕç кунĕ пуçланчĕ. Ирхи сменăра ĕçлекен работницăсем пурте хăйсен станокĕсем умне тăрса тухнă. Вĕсем рак хуранĕсене илеççĕ те, хăвăрт çавăрăнса касакан станок сумне хĕстерсе тытаççĕ... Станоксем çумĕнчи коробкăсем çавра тӳммесемпне тулса пыраççĕ.

Эпир пырса кĕнĕ чухне цех начальникĕ Перасковия Никитина юлташ хăйĕн цехĕнчи работницăсем мĕнле ĕçленине сăнаса çӳрет.

— Ытлашши сăмах ваклама юратмасть вăл. Ĕçленĕ вăхăтра ăна чăрмантарма та кирлĕ мар, — асăрхатарчĕç пире. Чăн та, вăл производствăри дисциплинăна лайăх хăнăхса çитнĕ. Никитина юлташ Тавăшкасси ялĕнче ӳснĕ. Малтанах батрачка пулнă, унтан Çĕмĕрле комбинатĕнче гнутарнăй цехра ĕçленĕ.

1935 çулта Çĕрпӳре тӳмме фабрики уçăлать. Никитина юлташ хăйсен районне, çĕнĕ фабрикăра ĕçлеме куçать. Кунта вăл станок çинче ĕçлеме кĕрет, малаллах вĕренсе пырать.

Никитина юлташ виççĕмĕш çул ĕнтĕ—резальнăй цех начальникĕ. Унăн 35 работница ĕçне тĕплĕн пĕлсе тăмалла, вĕсен производствăри ĕçне тĕрĕс организацилемелле. Вăл хăйĕн ĕçне ăнăçлă туса пырать. Паха ĕçсемшĕн 5 хутчен премби илнĕ.

Ĕçсыннисем валли куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларма тăрăшаççĕ работницăсем. Апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа фабрикăра рак хуранĕсенчен кăна мар, шăмăран та тӳммесем туса кăларма тытăнаççĕ.

Анчах та «Перламутр» артель правленийĕ тухăçлă ĕçлеме кирлĕ условисем çитĕклĕ туса паман-ха. Часчасах чĕртавар çитмест. Çакна пула февраль уйăхĕнче фабрика 10 кун хушши ĕçлемесĕр тăнă.

— Пахалăхлă продукци тума вĕренсе çитрĕмĕр. Артель правленийĕ чĕртавар кирлĕ чухлĕ тăратсассăн, плана вăхăтра тата ирттерсе тултаратпăр,— теççĕ резальнăй цехра ĕçлекенсем.

Т. МАЙОРОВ.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Шăмăршă районĕнчи сыхăну конторин начальникĕ, Чăваш АССР Верховный Совечĕн депутачĕ Варвара Игнатьевна Журавлева юлташ.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Тивĕçлĕ авторитет

Сосновкăри (Шупашкар р.) туллимар вăтам шкулти учительница Надежда Владимировна Степанова юлташ çак ĕçре 26 çул хушши ĕçлет. Унăн пархатарлă ĕçне хакласа, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Степанова юлташа «За трудовое отличие» медальпе наградăланă.

Надежда Владимировна пуçламăш классенче вĕрентет. Унăн класĕнчи учениксем пит лайăх вулаççĕ, тĕрĕс çыраççĕ, вĕсем — дисциплинăллă тата культурăллă. Кăçалхи вĕренӳ çулĕн пирвайхи çурçулĕнче те Степанова юлташ вĕрентекен класс малти вырăна тухнă.

Степанова юлташ шкулта вĕрентнĕ сынсем нумайĕшĕ ĕнтĕ инженерсем, врачсем, Хĕрлĕ Çарта командирсем, летчиксем, педагогсем пулса ĕçлеççĕ. Вăл хăйĕн воспитанникĕсенчен часчасах ăшă çырусем илет.

Надежда Владимировна çамрăк учительсене пысăк пулăшу парать. Тата вăл колхозниксем хушшинче те тăтăшах ĕçлесе пырать. Ачасене лайăх вĕрентнĕшĕн тата халăх хушшинче ĕçленĕшĕн Степанова юлташа Сосновкăри колхозниксем хисеплесе юраççĕ. Тăрăшса ĕçленипе туяннă вăл çак авторитета.

М. В. Сметанин.

Бригадир ĕмĕчĕсем

— Евдокия Прокопьева? Пĕлетпĕр, пĕлетпĕр. Виççĕмĕш бригадăн бригадирĕ вăл. Çав çуртра пурăнать. Тем, тĕл пулаймăр эсир ăна, килте ларакан мар. Пĕрмаях ĕçлет...

Çапла каласа пачĕ пире пĕр мучи бригадир Прокопьева юлташ çинчен.

Евдокия Прокопьева юлташ колхозра уйăхир бригадин бригадирĕ пулса çулталăк ытларах кăна ĕçлет-ха. Анчах халĕ Киров ячĕпе тăракан колхозра (Канаш районĕ) вăл тăрăшса ĕçленипе çинчен пĕлмен çын çук. Кашниех унăн иртнĕ çулти паха ĕçĕсем çинчен тĕплĕн калама пултарать.

— Прокопьева бригади пек ĕçлес пулать,—теççĕ тепĕр чухне колхозниксем.

Чăн та, Прокопьева юлташа ырламалли пур. Вăл ертсе пыракан бригада иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче колхозра малти вырăна тухнă. Прокопьева юлташ бригади иртнĕ çулта гектартан ыраш 16,5 центнер пухса кĕнĕ. Ытти культурăсене унтан та ытларах туса илнĕ. Сăмахран, гектартан тулă 20 центнер, урпа 23 центнер, пăри 19 центнер ытла тухнă. Çак çитĕнӳсене бригада пĕтĕмпех агротехника правилисене пурнăçа кĕртнипе тунă.

— Кăçал эпир гектартан ыраш, пăрça, çурхи тулă 20 центнертан сахал мар, урпа 35 центнер, кĕрхи тулă 25 центнер туса илмо ĕмĕтленетпĕр, — каласа парать Прокопьева юлташ.

Пурнăçа кĕмелли ĕмĕтсем. Бригада хăйĕн ĕмĕчĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме халех тĕплĕн хатĕрленет. Вăрлăхсене сортласа хунă, ялхуçалăх машинисем: плугсем, сеялкăсем юсавлă. Сӳсмен таврашсем те çитĕклĕ. Çак кунсенчех çĕрле çемçетме кирлĕ япаласем те пĕтĕмпех хатĕр пулаççĕ. Прокопьева юлташ вăйлă тырпул туса илмешкĕн пĕлӳ кирли çинчен те манмасть. Халĕ вăл тата бригадăри колхозниксем стахановла шкула, агрокружока вĕренме çӳреççĕ.

Ив. МАЛОВ.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: чаплă ученăй-хĕрарăмсем. Сулахайран сылтăмалла: академик Л. С. Штерн, СССР Наукăсен Академийĕн член-корреспонденчĕсем Р. С. Левина тата А. М. Панкратова.

В. Шаровский фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

Машинист помощникĕсем

Хисеп хăми çинче фото-ӳкерчĕксем. Укерчĕксен айне çапла çырнă: стахановец машинист Назаров, стахановка машинист помощникĕ Александра Алексеевна Шмарина, стахановка машинист помощникĕ Анастасия Степановна Уткина....

— Пирĕн пулас машинистсем, теççĕ вĕсем çинчен кунта.

* * *

Çĕрле, Шартлама сивĕ. Хула ăшă ыйăхра. Анчах кунта хĕрӳллĕ ĕç пырать. Лини хĕррипе лартса тухнă юпасем çинчи прожекторсем татти-сыпписĕр çутă пайăркисем сапаççĕ. Вăхăтран вăхăта çеç, паровозсем ирттерсе кайнă хыççăн, прожекторсен çутине паровоз трубинчен палкаса тухакан хура тĕтĕм хупласа илет. Паровоз гудокĕсем, рожок сассисем илтĕнеççĕ. Вагонсем урлă хĕрлĕ çутăсем курăнаççĕ.

Паровоз хаплатни хытăрах та уçăлăрах илтĕнме пуçларĕ. Вăл пирĕн çине килнĕ пекех туйăнать. Часах депо çуртĕнчен пĕр алла-утмăл утăмра çуталса выртакан лини çине лутра паровоз çитсе чарăнчĕ.

Лутакарах çын паровоз çинчен васкаса анчĕ те, ăна тĕрĕслесе тухрĕ. Унтан паровоз прожекторне тасатма пуçларĕ. Прожектор унăн сăн-сăлатне, кĕлеткине çутатать. Сийĕнче ăшă ватка пиншак тата шалавар. Çил вĕрнипе сарă çӳçĕ çеçĕкĕн хумханать.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, тепĕр паровоз çитсе чарăнчĕ. Прожектор тасатакан çын ун çине çавăрăнса пăхрĕ те татах ĕçлеме тытăнчĕ.

— Шура! — илтĕнчĕ сасă. — Ĕçсем мĕнле? Икĕ кун канмалли пулать пирĕн. Шупашкара кайса килтĕмĕр...

— Халь çеç килтĕн-и? —ыйтрĕ Шура хăй патне пырса çитнĕ çынăн алисене чĕмăртаса. — Эпĕ те ĕç пĕтертĕм...

Вĕсем машинист помощникĕсем — Александра Алексеевна Шмарина тата Анастасия Степановна Уткина юлташсем.

Машинист помощникĕн профессине икĕшĕ те пĕр вăхăтра тата пĕр хулара — Муромра илнĕ. Муромра машинист помощникĕсен курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн та вĕсен пурнăçĕ пĕр пекех ăнăçса пырать. Александра Шмарина маневр тăвакан паровоз çинче, Анастасия Уткина Канашпа Çĕмĕрле, Улатăр, Шупашкар хушшинче çӳрекен паровоз çинче ĕçлеççĕ. Иккĕшĕ те стахановкăсем, хăйсен пĕлӳне ӳстерессишĕн куллен çине тăрса ĕçлеççĕ. Шмарина юлташ ĕçлекен паровоз яланах тирпейлĕ, кăмăрка перекетлет. Уткина юлташ ĕçлекен паровоз та пысăк хисепре. Вăл тасалăхпа, тирпейлĕхпа палăрса тăрать.

— Эпĕ производствăра 1938 çулта çак депора техничка пулса ĕçлеме пуçларăм, — каласа парать Шмарина юлташ.

Шăпах çав çулта ĕнтĕ паллă машинист Зинаида Троицкая юлташ пуçарнипе чугунçул транспортĕнче паровоз çинче ĕçлеме хĕрарăмсен пĕрремĕш бригадине организациленĕ. Вĕсен примерĕпе çĕршер хĕрарăмсем чугунçул çинче, паровозсем çинче ĕçлеме вĕренме тытăнчĕç. Вĕсен хисепĕнче Шмарина тата Уткина юлташсем те.

М. ТИТОВ.

Канаш. (Хамăр корр.).

Хĕрарăмсен активлăхĕ

Иртнĕ çулта пирĕн Канаш станцинчи парторганизаци килхуçи хĕрарăмсем хушшинче ĕçлессине чылаях лайăхлатрĕ. Узелти партком, çавăн пекех уйрăм производствăсенчи пуçламăш парторганизацисем те активисткăсемпе кашни уйăхрах канашлусем туса ирттернĕ.

Мĕн курăнчĕ-ха çакăн пек канашлусем ирттернĕ хыççăн? Килхуçи хĕрарăмĕсен активлăхĕ эпир кĕтнинчен те ытларах пулчĕ. Кашни хĕрарăм мĕнле ĕçе те пулин хутшăнма тăрăшать.

Депори женорганизатор Прокофьева, станцăри женорганизатор Назарова юлташсем хăйсем тавра актив пухнă. Хĕрарăм-активисткăсем пурте ĕçе хутшăннă. Пĕрисем — рабочисене валли вĕри апат ĕç вырăнне илсе пыраççĕ, теприсем — цехсенче, общежитисенче тирпейлĕх тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Халĕ ĕнтĕ рабочисем перерывра апат çиме киле е столовăйне çӳресси çинчен шутламаççĕ те. Вĕсем пĕлеççĕ: çĕрле-и, е кăнтăрла, апат çимелли вăхăтра лайăх та тутлă апат ĕçленĕ вырăнтах пулать. Кунта Самойлова, Степанова, Подуздикова, Иванцева тата ытти юлташсем питех тăрăшаççĕ.

Кăçал юр нумай çурĕ. Лини çинчи юра вăхăтра тасатмасан, поездсем çӳремелли график пăсăлать. Анчах та вăхăтра тасатма хăшпĕр чухне ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулать. Килхуçи хĕрарăмĕсем çавна ялан асра тытаççĕ. Вĕсем çилтăманлă çанталăк хыççăн бригадăсем организацилесе, юр тасатма тухаççĕ. Çапла, кăçал юр тасатас ĕçе темиçе вуншар килхуçи хĕрарăмсем хутшăнса ĕçлерĕç.

Партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене вĕреннĕ май, хĕрарăмсем производствăра тасалăх тăвассишĕн кĕрешӳ пуçарчĕç. Халĕ вĕсем паровозсене, стрелкăсене мĕнле тытса усранине тата общежитисене тĕрĕслеме бригадăсем организациленĕ. Конференци умĕн хĕрарăмсем линисем çинче сапаланса выртнă металл татăкăсене 11 тонна ытла пухнă. Металлом пухасси халĕ те пырать.

Хĕрарăмсем рабочисен кану вăхăтне культурăллă ирттерес тĕлĕппе те пысăк пулăшу параççĕ. Прокофьева юлташ ертсе пыракан драмкружок кăçал темиçе постановка панă.

РЖАВИН.

Канаш узелĕнчи партком секретарĕ.

Райсовет депутачĕ

Пушнарти (Етĕрне районĕ) Евдокия Соловьева юлташ çинчен сăмах тапратсанах, Мичурин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем:

— Пирĕн колхозри ĕç паттăрĕ, ĕç организаторĕ,—теççĕ.

Вăл колхоз производствинче кăна мар, общественнăй ĕçсенче те активлă ĕçлет. Пур çĕре те çитет, пур ĕçре те ĕлкĕрет Соловьева юлташ.

1935 çулта вăл колхозник-ударниксен крайри II-мĕш съездĕнче пулнă. Унта илнĕ паха опыта колхозниксем хушшинче сарса пынă.

Соловьева юлташ — Етĕрне район Совечĕн тата Кăташ ял Совечĕн депутачĕ. Депутат ĕçĕсене вăл яланах вăхăтра, тĕрĕс пурнăçласа пырать.

Иртнĕ çулта Соловьева юлташ ВКП(б) ретне кĕнĕ. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» кĕçĕн звено тăрăх тăрăшса вĕренет.

Унăн ывăлĕ-хĕрĕсем шкулсенче вĕренеççĕ. Ывăлĕ, Иван, Етĕрнери педагогика училищине пĕтернĕ хыççăн Хĕрлĕ Çар ретне кайнă. Унтан вăл амăшĕ патне хаваслă çырусем ярать.

Н. ЦВЕТКОВ.

Çĕмĕрлерен килнĕ çырусем

Стахановкăсем

— Акă, пăхăр, мĕнле продукци туса кăларатпăр эпир,—каласа парать мастер Петр Романович Евсеев.

Вăл тулли ещĕкрен пăта тăрштăпа татнă пралуксене илет те сĕтел çинче хурать.

— Çакăнтан эпир тĕрлĕ виçеллĕ шурупсем тăватпăр. Ытти цехсенче пирĕн шурупсемпе усă кураççĕ. Коллектив пысăк мар пулин те, хамăра панă заданине эпир ирттерсе пурнăçа кĕртсе пыратпăр,—тет мастер.

Древкомбинатри шуруп производстви чăнах та кашни уйăхрах хăйĕн программине ирттерсе тултарать, çирĕп график тăрăх ĕçлесе пырать.

...Александра Киселева юлташ шуруп производствинче улттăмĕш çул ĕçлет. Хальхи вăхăтра вăл паллă сортировщица, стахановка.

...Екатерина Васина тата Отрыванкин юлташсем иккĕн 5 станок çинче ĕçлеççĕ. Нормăна кашни кунах ирттерсе тултараççĕ. Февраль уйăхĕнче вĕсем плана 160 процент тултарнă.

...Ирина Боченкова юлташ цехра 1936 çултанпа ĕçлет. Малтанах ăна инструментальщик вырăнне ĕçлеттернĕ. Çав вăхăтрах техминимум кружокне çӳренĕ, килте вĕреннĕ, литература вуланă. Тăрăшни харама кайман, часах ăна приемщица пулса ĕçлеме куçарнă. Халĕ вăл шуруп тăвакан станок çинче ĕçлет. Нормăна нумай ирттерсе тултарать.

Хальхи вăхăтра рабочисемпе работницăсем партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Улшăнусем пур ĕнтĕ: сапаланса выртакан детальсене пустарнă, материалсемпе тата инструментсемпе тирпейлĕн усă курма пуçларĕç, график тăрăх ĕçлеççĕ, ĕç вырăнĕсем таса.

Хăр. ЛИСИН.

(Хамăр корр.).

ФЗУ шкулĕнчен вĕренсе тухсан

Пирĕн цехра ĕçлекенсем хушшинче çурри ытла хĕрарăмсем. Вĕсем производство планне тултарассишĕн, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн тата лайăх пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн вăя хурса ĕçлеççĕ. Цехра стахановкăсемпе ударницăсем те сахал мар. Акă, Федорова, Никифорова, Борзова юлташсем СССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариатĕнчен «Отличнику социалистического соревнования» значок илмо тивĕçлĕ пулчĕç.

Акă, Анисимова, Герасимова, Митрофанова, Жирнова юлташсенех илер. Вĕсем пурте ответлă вырăнсенче, пурте нормăсене ирттерсе тултараççĕ. Вĕсем — стахановкăсем.

ФЗУ шкулĕнчен вĕренсе тухсан эпĕ 1938 çулта гнутарнăй цеха станочникша пулса ĕçлеме кĕтĕм. Станок пайĕсене пĕлнĕ пулсан та, малтанах ĕçре йывăрлăхсем пулнă. Анчах вĕсенчен эпĕ шикленмен, ялан тăрăшса, вăл хурса ĕçленĕ.

Анчах юлашки вăхăтра пире детальсем çителĕклĕ парса тăмаççĕ. Çавна пула простой нумай пулать. Сверло та япăх. Слесарьсем чылай вăхăт хушши ĕнтĕ прижим туса парасси çинчен каласаççĕ, темшĕн паян кун та ăна пурнăçламаççĕ. Çакă вăл пире ĕç тухăçлăхне ӳстерме чăрмантарать.

М. МАРТЫНОВА.

Древкомбинатри 3-мĕш номерлĕ цехри стахановка.

Пур ĕçре те пултарруллă

Иртнĕ çулта эпĕ завода ĕçлеме кĕтĕм. Завода пытăм та, пăхатăп: пур çĕрте те хĕрарăмсем ĕçлеççĕ.

Тăрăшса вĕрентĕм те часах станок çинче ĕçлеме куçрăм. Кĕске вăхăт хушшинчех эпĕ нормăна ирттерсе тултарма пуçларăм, стахановка ятне илтме тивĕçлĕ пултăм.

Чылай вăхăт иртсен мана урăх ĕçе—хăма çуракан цеха накатчика куçарчĕç.

Эпир цеха пĕренесем тăрататпăр. Пирĕн задача — хăма çуракан рамăна простойсăр, йĕркеллĕн ĕçлеттересси. Çак ĕçе пирĕн бригада ăнăçлăн туса пырать. Пирĕн цех январь тата февраль уйăхĕнче плана ирттерсе тултарчĕ. Çитес кунсенчех пĕрремĕш квартал планне тултарма шутлатпăр.

Ф. ТОЛСТОВА.

«Труженик» заводри стахановка-накатчица.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Çĕрпӳ райçĕрĕç пайĕн сад ĕрчетес енĕпе ĕçлекен агрономĕ Мария Сергеевна Блинова юлташ.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Ачасем—пирĕн савăнăç

Малти пӳртрен пукане пек илемлĕ тумланнă пĕчĕк хĕрача чупса тухрĕ.

— Кам кирлĕ сире? — терĕ вăл пирĕн пата пырса.

— Анӳ килте-и?

— Килте. Анне, сана темĕнле пиччесем курасшăн, — тесе сиккелесе кĕрсе кайрĕ вăл малти пӳрте.

—Халех. Камсем пулчĕç-ха вĕсем? Иртĕр, ларăр. Паллаймарăм-çке сире? —тесе сăпать пире Александра Федоровна.

Эпир хамăр мĕн ĕçпе пынине каласа патăмăр. Сăмах хыççăн сăмах, çапла пĕр-пĕринпе паллашрăмăр.

Общественнăй ĕç тесен вара Александра Федоровна чунне парать. 15 çул хушшинче вăл мĕнле ĕçре кăна ĕçлемен-ши: урам комитечĕнче нумай вăхăт ĕçленĕ, унтан шкулта родительски комитетра, детсадра дошкольнăй образовани комитетĕнче ĕçленĕ. Халĕ те вăл хула Совечĕн активĕ хисепĕнче тăрать, пĕр пухуран та, канашлуран та юлмасть. Тăрăшса ĕçлет.

— Ачасем пит хисеплеççĕ, чыслаççĕ пире, — тет вăл. — Пăхса савăнатпăр ашшĕпеле çак хамăран юратнă ачасем çине. Пăхăр-ха эсир, пĕринчен пĕри аван! Капла эпĕ мухтаннă пек туйăнать те ĕнтĕ, анчах тĕрĕссипе каламалăн сире, ачасем пире пит савăнтараççĕ. Чĕре хĕпĕртет вĕсем çине пăхсассăн!

Вĕсене лайăх воспитани парас тĕлĕппе питĕ тăрăшса ĕçленĕ амăшĕ, халĕ те çав тери тăрăшать.

Чи аслă хĕрĕ унăн, Ксения ятлăскер, магазинра ĕçлет. Виктор ятлă ывăлĕ авторемонт заводĕнче токарь пулса ĕçлет. Владимир ятлă ывăлĕ те çавăнтах слесарнăй мастерскойĕнче вĕренет. Вĕсен 50 çула çитнĕ ашшĕ Михаил Никифорович — кровельщик, çав заводрах чи лайăх стахановецсенчен пĕри шутланать.

— Асталăхĕ пур ман упăшкан, — тет Александра Федоровна, — мĕн тытнă çавна туса парать. Чи юратнă ĕçĕ унăн шăвăçран тĕрлĕрен япаласем, савăт-сапасем тăвасси.

Çамрăк ачисем шкулта вĕренеççĕ. Пире хирĕç тухса пирĕнпе калаçни, 5 çулхи Тамара, 11-мĕш номерлĕ детсада çӳрет.

Кăçал Александра Федоровнăн аслă хĕрĕ Ксения Михайловна Мускава Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинне кайса килнĕ. Таврăнсан Мускавра мĕн курнине ачасене те каласа панă: метро унта, Ленин мавзолейĕ, выставкăри павильонсем...

Пуринчен ытла Мускав 5 çулхи Тамарăна кăмăла кайнă мĕн. Халĕ вăл амăшне Мускава каясси çинчен кашни кун асăрхаттарать.

— Хăçан илсе каятăр мана Сталин атте патне, — тет вăл амăшне пĕрмаях.

Халĕ вăл амăшне ыталанă та пирĕнпе калаçнине кулкаласа итлесе ларать.

— Çитес çулхине Тамарăпа Мускава кайса кураçах тетĕп ĕнтĕ, хамăн та пит кайса курас килет, — тет Александра Федоровна.

Пӳрчĕ вĕсен çутă та пысăк. Кашни пӳлĕмĕнчех чечексем туллиех. Пит таса тытать пӳртне Александра Федоровна. Ачисен тумтирĕсем те тирпейлĕ.

Александра Федоровнăна — унăн 8 ача — государство кашни çул 4-шар пин тенкĕ укçа парса тăрать.

Эпир каллех ачасем çинчен сăмах тапратрăмăр.

Хăйĕн ятне илтсессĕн Тамара йăлт! савăрăнса пăхрĕ амăшĕ çине. Пăхрĕ те савăнса кулса ячĕ.

— Пăх-ха, анне, акă Сталин атте ларать, — кăтартать вăл «Комсомольская правда» хаçатăн малтанхи страницин çине. Сенкер кусĕсем унăн выляса тараççĕ, тутисем кулаççĕ, пĕтĕм сăн-пичĕ савăнăçла.

С. ЯЛАВИН.

Шупашкар хули.

Советлă Литвари хĕрарăмсем

Кăçалхи çул Литвара хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунне пирвайхи хут ирĕклĕн паллă тăваççĕ.

Литвари ĕçхĕрарăмĕсем нумай çулсем хушши буржуази пусмăрĕ айĕнче асапланнă, йывăр хĕнхур тӳссе пурăннă. Буржуаллă Литвара хĕрарăмшăн шкул алăкĕсем хупă пулнă. Политикăллă ĕçе хутшăнма ирĕк паман вĕсене. Сăмахран, сейм депутачĕсем хушшинче пĕр хĕрарăм та пулман.

Нихăçан та хĕвел çутти кĕмен нӳрлĕ хваттерсенче, хăйсен çурма-выçă ачисем типсе шурнине пăхса, амăшĕсем вĕри куççулĕ юхтарнă. Хĕрарăмшăн ĕçе кĕме май пулманна пĕрех (арçынсем хушшинче те ĕç тупаймасăр пурăнакан çынсем сахал мар пулнă). Квалификацияллĕ работница фабрикăна пырса лексен, ăна кунне 14—16-шар сехет ĕçлеттерĕç.

Литвара совет влаçĕ туса хурсан, пирĕн умра анлă пурнăç çулĕ уçăлчĕ. Сталинла Конституци тăрăх хĕрарăмсем арçынсемпе пĕртан правăсемпе усă кураççĕ. Литва ССР Верховный Совечĕн депутачĕсем хушшинче — 8 хĕрарăм. Литва халăхĕ хăйĕн 9 хĕрне СССР Верховный Совечĕн депутачĕсене суйларĕ. Халăх хуçалăхĕн мĕнпур участокĕсенче, государство органĕсенче — пур çĕрте те Литва хĕрарăмĕ, арçынсемпе алла-аллăн тытăнса ĕçлесе, çĕнĕ, хаваслă пурнăç тăвать. Вĕсем хушшинче — Елена Гележюнайте. Мĕнпур батраксен ачисем пекех, вăл çамрăклах хуйхă, хĕнхур, чăтма çук йывăр ĕç тӳссе асапланнă. 8 çулти хĕрача чухне кулак выльăхчĕрлĕхне кĕтмелле пулнă. 12 çултан пуçласа вăл кулаксемшĕн ĕçленĕ.

Çамрăк чухне пуçласах Елена Гележюнайте революциллĕ движенине хутшăнать. 1931 çулта Мариамполь округĕнчи суд ăна 2 çул хушши тĕрмере хупса усрамалла тунă. Укмергин тĕрмере ларнă вăхăтра вăл коммунистла парти ретне кĕнĕ. Пĕр хут çеç мар арестленни те, концентрацияллĕ лагерьсене хупа-хупа лартни те унăн революциллĕ паттăр чун-хавалне çĕмĕрме пултарайман. Тĕрмерен тухнă хыççăн вăл революциллĕ ĕçе çĕнĕ вăйпа тума тытăннă. Хальхи вăхăтра Елена Гележюнайте — пысăк партработник, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ.

Унăн сулйĕрĕ — Литва халăхĕн çĕршер те пиншер хĕрĕсен çулйĕрĕ пулса тăрать.

Литва ÇС Республикинче ĕçхĕрарăмсен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе халех нумай ĕçсем туса ирттернĕ ĕнтĕ. Ĕçсыннисен 12.558 çемьи нӳрлĕ подвалсенчен çутă хваттерсене, халичен пуямсем пурăннă хваттерсене куçнă. Ачасем валли 76 çурт, çĕршер шкул, хĕрарăмсемпе ачасен консультацийĕсем уçнă, Вильнюс хулинче амăшĕпе ача сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен институт организациленĕ. Кăçалхи çул ача çуратмалли 80 çурт уçма палăртнă.

Халăх хушшинче вĕренес кăмăл вăйлăн çĕкленсе кайрĕ. Хальхи вăхăтра çитĕннисен тĕрлĕ шкулĕсенче 40 пин çын вĕренет. Вĕсем хушшинче хĕрарăмсем те нумай.

Елĕк чухăнсен çемьинче пĕчĕк ача ытлашши пыр вырăнĕнче шутланнă. Халĕ вăл — ашшĕ-амăшĕн савăнăç. Государство ачасене пăхса ӳстерме пулăшать, нумай ачалла амăшсем государствăран пособи илеççĕ.

Большевикла парти, совет правительстви çакăн пек тăрăшнăшăн тав туса, Литвари хĕрарăмсем обществăллă ĕçе, социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнаççĕ. Пирĕн фабрикăсенче стахановкăсен, нумай станокпа ĕçлекенсен речĕсем ӳссе пыраççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен телейĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшакан сыннăн ятне — Сталин юлташăн ятне Литвари хĕрарăмсем пĕтĕм чĕререн хисеплесе, юратса каласçĕ.

СССР Верховный Совечĕн депутачĕ

М. ВАСИЛЯУСКАЙТЕ.

Каунас, (ТАСС).

Ишлей районĕнчи Ярапайкасси ялсоветĕнчи «Красная Чувашия» колхоз колхозници Ксения Алексеевна Соколова 8 ачашăн государствăран кашни çул 4 пин тенкĕ пособи илсе тăрать. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: К. А. Соколова юлташ хăйĕн семьипе.

К. БАБАЕВ фото-ӳкерчĕкĕ.

Чăваш хĕрарăмĕсен патша саманинчи пурнăçĕпе кĕрешĕвĕ

(Историллĕ фактсем)

Патша Российĕнче ĕççыннисем йывăр пусмăр тӳссе пурăннă. Ун чухне хĕрарăмсем чура вырăнĕнче пулнă.

Архивра крепостной хресченсене (час-часах семьипех) сутни-илни çинчен калакан тата ĕççыннисем пусмăрçăсене хирĕç кĕрешнĕ çĕре хĕрарăмсем те активлă хутшăнни çинчен калакан документсем нумай.

Акă, Шупашкарта, 1820 çулти декабрĕн 20-мĕшĕнче пулнă ĕç çинчен калакан документ. Çав хут тăрăх Введенски чиркӳри поп арăмĕ Стременская хăй патĕнче пурăннă Пелагея Данилова ятлă хĕре сутнă. Пелагея Даниловăна, унăн 100 тенкĕ парса, поручик хĕрĕ Кратина илнĕ.

Çавăн пекех 1821 çулти июлĕн 13-мĕшĕнче Соловцов (Шупашкарти чиновник) крепостной пулнă Василий Прокопьева, унăн арăмне тата пĕчĕк ачисене Кропоткина княгиняна сутнă. 1838 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче Çĕрпӳри помещик Арцыбашев Мами-салинчи (хальхи Çĕрпӳ районĕнче) Ефимия Кузьмина ятлă хĕре 57 тенкĕ те 14,5 пуса сутса янă. 1841 çулти февралĕн 8-мĕшĕнче подполковник арăмĕ Белеконничева хăйĕн крепостной сынни пулнă Анна Игнатьевăна тата унăн хĕрне Устинене 100 тенкĕлле сутнă... Кун пек фактсем татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Крепостной право пулнă чухне хресченсене вылăх-чĕрлĕх вырăннех сутнă тата сутăн илнĕ. Крепостной правăна пăрахăçа кăларнă хыççăн та хресченсен пурнăçĕ çăмăлланман, — вĕсем помещиксене çĕршĕн укçа тӳлесе, çĕр сахаллипе, куланай пысăкипе тата ытти инкекссене пула асапланнă. Капиталист фабрикине ĕçлеме кĕрсен те ырри пулман. Унта 12—14 сехет ĕçлеттернĕ, укçине питех те сахал тӳленĕ.

Патша Российĕнче хĕрарăмсем хăрушла тĕттĕмлăхре пурăннă. Çапла, сăмахран, 1897 çулти переписç тăрăх чăваш хĕрарăмĕсен хушшинче хутла пĕлекеннисем 2 процент кăна пулнă.

Ĕççыннисем, ĕçхĕрарăмĕсем те, часчасах пусмăрçăсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленнĕ. Чăваш халăхĕн историйĕнче чăваш ĕçхĕрарăмĕсем алла хĕçпăшал тытса помещиксемпе чиркӳ пусмăрне хирĕç, патша ялсĕсене хирĕç кĕрешнĕ фактсем сахал мар пулнă.

Пугачев ертсе пынă хресченсен вăрçине чăваш хĕрарăмĕсем, арçынсемпе пĕрлех, активлă хутшăннă. 1842 çулта Чикме уездĕнче сарăлса кайнă хресченсен движенине хутшăннă хĕрарăмсен хисепĕ уйрăмах пысăк пулнă. Унта çав çулхине,—восстание пусарма килнĕ генерал-майор Мандрык Хусанти военнăй губернатора çырса пĕлтернĕ тăрăх, — чăваш хĕрарăмĕсене 100 çынна арестленĕ. (Вĕсем çинчен генерал-майор Мандрык «100 баб (чувашек)» тесе йĕрĕнсе çырнă).

1842 çулта хресченсен движенине Бояш-Тюмерли ятлă ялти Марфа Андреева пит активлă хутшăннă. Çавăнпăн ăна патша сучĕ сход умĕнче 25 хут розгăпа çапмалла суд тунă.

1905—1907 çулсенчи революци вăхăтĕнче те ĕçхĕрарăмĕсем революцилĕ кĕрешĕве активлă хутшăннă.

1916 çулта Етĕрне уездĕнчи Турай тата Чăваш Сурăм вулăсĕсенчи салтак арăмĕсем хытă пăлханнă. Вĕсем вулăсри старшина патне пырса, арçынсене вăрçăран киле яма тата хăйсене пулăшу пама ыйтнă.

Çакăн пек ĕнтĕ ĕçхĕрарăмĕсен патша саманинчи йывăр пурнăçне тата вĕсен кĕрешĕвне кăтартакан уйрăм фактсем. Анчах вĕсен стихийлă кĕрешĕвĕ ăнăçсăр пулнă, эксплоататорсене çĕнтересси патне илсе çитереймен.

1917 çулти Октябрьти социализмлă аслă революци тин мĕнпур ĕççыннисене, хĕрарăмсене те, пур тĕрлĕ пусмăртан та хăтарчĕ. Аслă çулпуçсем Ленин тата Сталин ертсе пынипе, эпир телейлĕ, ирĕклĕ, савăнăçлă пурнăç турăмăр.

П. ГРИГОРЬЕВ.

Нумай ачаллă амăшсене— 4.410 миллион тенкĕ

Государство нумай ачаллă амăшсене паракан пособи суммине çултан çулах ӳссе пырать. 1936 çулта нумай ачаллă амăшсем 200,2 миллион тенкĕ илнĕ, иртнĕ çулта—1.225,5 миллион тенкĕ пулнă, закона кăларнăранпа пурĕ 4.410 миллион тенкĕ илнĕ. Совет Союзĕнче 450 пине яхăн амăшĕ государствăран пулăшу илсе тăраççĕ.

ПИРĔН САНЮК

(Пĕчĕк калав)

«Шурăмпуç» колхоза çитсен, эпĕ чи малтан колхоз председателĕпе — Самаркин юлташпа паллаштăм. Вăл хурарах кăна, вăтам пӳллĕ, тăрăхларах питлĕ, вăрăм сăмсаллă, сухаллă чăваш. Калаçма вара питĕ пултаракаскер. Нумай вĕренмен пулсан та, хăйне шанса панă ĕçе лайăх ертсе пырать. Ку районра «Шурăмпуç» колхоз—пĕрремĕш вырăнта. Çавăнпа вăл иккĕмĕш хут ĕнтĕ Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче пулма тивĕç илчĕ.

Эпĕ Самаркин юлташпа алă тытса кăшт калаçкаланă хыççăн, колхоз правленине пĕр 20—22 çулхи хĕр пырса кĕчĕ. Вăл пуçне хăлхаллă çĕлĕк тăхăннă, уринче ватă, çийĕнче арçын пиншакĕ, умне саппун çыхнă, аллине сăран алса тăхăннă.

— Акă вăл, пирĕн Санюк. Паллашăр, — терĕ Самаркин юлташ.

Санюк малтан ман куçран пăхрĕ те йăл кулчĕ, çӳхе тутисем хушшинчен шурă шăлĕсем сахăр пек курăнчĕç. Унтан вăл сылтăм аллинчи сăран алсине хыврĕ те:

— Аван-и, юлташ! — тесе манăн алла тытса чăмăртарĕ.

— Çакă ĕнтĕ, вăл, пирĕн Санюк. Вăл пăхакан сысна ами кашни çулленех 25 çурĕ тăвать, Санюк пурне те пăхса ӳстерет, — тесе мухтаса каларĕ Самаркин юлташ.

— Пăхма çеç ан ӳркен. Хăйсемех ӳсеççĕ. Кăçал акă эпĕ 25 мар, тата ытларах пăхса ӳстересшĕн, — тесе хучĕ пирĕн Санюк.

Санюк правленинче вăрах тăмарĕ. Самаркин юлташран мĕн тумаллине ыйтса пĕлчĕ те тухса кайрĕ.

— Утниченех палла, пултаракан хĕр, — терĕм эпĕ.

— Тин ĕнентĕн-и? Колхозниксем пурте пирĕн Санюк пек ĕçлесен, курăнсах тăрать, эпир тата пуянрах пулмалла. Анчах наянсем те пур-ха пирĕн хушăра. Çавсем чăрмантарасçĕ. Ну, ничево... Пирĕн Санюк пеккисем наянсене те хыçалтан тĕкеççĕ. Лешсем те çапкаланса пыраççĕ, — терĕ Самаркин юлташ.

— Сысна фермине уçни нумай пулать-и? — ыйтрăм сăмах çавăрнăшĕ май.

— Ултăмĕш çул ĕнтĕ. Пирвайхи çулне хисеплеме те юрамасть. Вăл çул ку ферма пирки ĕç пулман, хуйхипе çеç ăнтăн кайнă. Ним те тума çук, сысна амисем çурласçĕ те, çурисем вилеççĕ те пĕтеççĕ. Юлашкинчен амисем те вилме пуçларĕç. 10 пуç сыснаран пурĕ иккĕ тăрса юлчĕç. Мĕн кăна туса пăхмастпăр, çук, майлаштарса яраймастпăр. Шалт аптраса çитрĕмĕр вĕт, фермăра ĕçлекенсене шанмасăр, сыснасене хам пăхатăп. Çук, пур-пĕрех ĕç тухмасть. Мĕн тăвас?... Шăп çав вăхăтра сысна пăхакансене вĕрентмелли курс уçăлчĕ районра. Пирĕн колхозран пĕр çын курса ямалла. Вĕренме кама ярас? Ватăрахчисенченех никам та каясшăн мар. Çамрăккисемпе те калаçкаласа пăхрăм. Çук, ирĕклĕн вĕренме каяс текен пĕри те çук. Юлашкинчен Санюка чĕнсе илтĕм. Вăл унчухне çамрăк — 15—16 çулта çеç пулнă.

— Ну, Санюк, вĕренме каяс килет-и? — тетĕп.

— Аçта, мĕнле шкула? — ыйтать пирĕн Санюк.

— Сысна пăхакансен курсĕ уçăлать, çавăнта, — тетĕп.

Санюк куçран пăхса илчĕ. Ним те шарламасть: «Ку та вĕренме каяссăн мар пулĕ ĕнтĕ. Урăх кама ярас? Хам вырăна заместителе хăварас та, хамăнах вĕренме кайас пулĕ. Анчах районрисем килĕшмеççĕ. Çурхи акана тухмалли вăхăт çывхарать», тесе шухăшлатăп. Эпĕ шухăшланă пек пулмарĕ.

— Урăххисем вĕренме каяс текенсем пулмасан, эпĕ каятăп, — тесе хучĕ пирĕн Санюк.

Савăнсах кайрăм. Лаша кӳлтĕм те, Санюка района икĕ уйăхлăха курса вĕренме леçсе хăвартăм.

— Ну, Санюк, вĕренсе тухсан сыснасем ĕрчететпĕрех, — тетĕп.

— Килнĕскер вĕренĕп ĕнтĕ, — тет Санюк мана савăнтарса.

Икĕ уйăхран пирĕн Санюк вĕренсе тавăрнчĕ. Тӳрех ĕçе тытăнчĕ.

Пирĕн Санюк, тухтăр патне кайса килчĕ те, чирлĕ сыснасене укол тутарчĕ. Эмелсем ĕстерчĕ. Сыснасем вилми пулчĕç. Амисем çурăлама пуçларĕç. Акă, хайхи çӳрисем те вилмеççĕ. Сысна ферми ӳсе пуçларĕ. Пĕр витене шăнăçми пулчĕç. Иккĕмĕш вите турăмăр.

— Ну, Санюк, кăçал сана колхозран чи пысăк преми паратпăр ĕнтĕ, — тетĕп.

Иртнĕ çулта пирĕн ферма Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче пулчĕ, ăна пысăк ылттăн медальпе наградăларĕç. Пирĕн Санюк Ленин орденĕ илчĕ. Акă мĕнле вăл пирĕн Санюк,—тесе каласа пĕтерчĕ Самаркин юлташ хăйĕн сăмахне.

Унтан Самаркин юлташ мана сысна фермине кăтартса çӳреме пуçларĕ. Кашни сысна ами валли уйрăм пӳлĕм. Пӳлĕм алăкĕ тĕлне сысна амин ятне, иртнĕ çул миçе çурă тунине çырса çапнă. Вунпилĕкшер пăтлă сысна амисем хăйсен çурисемпе хăртлатса калаçса выртаççĕ.

— Пирĕн сыснасем пурте ăратлисем, — тесе пĕлтерет Санюк мана.

— Сирĕн кунта пӳртри пек таса, — тетĕп эпĕ.

— Урайсене кашни кун: ир те, кăç та çăватпăр. Сысна çурисене таса сывлăш кирлĕ, — тет Санюк.

М. ЧАЛДУН.

Кĕтнĕ пурнăç çитрĕ

Эпĕ чухăн çын çемьинче çуралнă. Атте манăн атă-пушмак çĕлекен пулнă, анне пуянсем патĕнче тĕрлĕрен ĕçсем ĕçлесе пурăннă.

Пуçламăш шкулта икĕ çул ытларах вĕреннĕ хыççăн, мана вĕренме ямарĕç.

Халĕ манăн хĕрсем иккĕшĕ, Ангелинăпа Тамара, Хусанти мединститутра вĕренеççĕ. Килес çул Ангелина вĕренсе тухать. Роза—фармацевтсен шкулĕнче вĕренет. Хамăр ĕлĕк вĕренеймен пулсан та, ачасене авантарах воспитани пама тăрăшатăп. 14 çулхи Рима—7 класра, Виталий—4 класра вĕренеççĕ. Маргарита Ленин ячĕпе тăракан артельре ĕçлет. Чи кĕçĕнни, Генрих, 3 çулта çеç-ха.

Ачасем манăн шкулта пит аван вĕренеççĕ, киле тавăрăнсан та уроксене вăхăтра тата аван хатĕрленме тăрăшаççĕ. Ашшĕ вĕсен колхозра, хуларан 5 сухрăмра, тимĕрçĕ пулса ĕçлет. Килте вăл пĕрмаях пулаймасть, ачасене нимрен ытла хамăн пăхас пулать.

Государство пире кашни çул 2 пин тенкĕ укçа парса пулăшать, ачасене шкулсенче вĕренме, тумтир илме укçа ăçтан тупас-ши тесе хуйхăрмалли çук, государство нарăкан пулăшу ачасене вĕренме те, тумлантарма та, лайăх пăхса усрама та çитет.

Пĕтĕм чĕререн тав тăватăп çакăн пек пулăшу панăшăн партипе правительствăна, чи малтан аслă Сталина!

О. ЗАРУБИНА.

Шупашкар хули.

Библиотекăри кĕнеке— государство пурлăхĕ

ЭЛЕК. (Хамăр корр.). Библиотекăри кĕнекесем — государствăн хаклă пурлăхĕ. Вĕсемпе çĕршер, пиншер çынсем усă кураççĕ.

Анчах вулакансем чылайăшĕ кĕнекесене типтерлĕ тытказмаççĕ, ватса пĕтереççĕ е пачах çухатаççĕ.

Трофим Плотников (районри çутĕç пайĕн инспекторĕ) 1938 çултах Элĕкри библиотекăран В. И. Ленин сочиненисен II-мĕш томне илнĕ. Ун патне, кĕнеке леçсе пама хушса, темиçе хутчен те пĕлтерӳ янă, вăл яланах — «халех леçсе паратăп», тесе ответленĕ. Анчах кĕнеке халĕ те унăн аллинчех.

Çавăн пекех Серафима Михайлова (вăтам шкултан), Михайлов (Иӳçкассинчи туллимар вăтам шкул директорĕ), Кустарин (Тени шкулĕнчи учитель), Михайлова (ВКП(б) райкомĕнче ĕçлет) т. ыт. библиотекăран илнĕ кĕнекесене темиçе çул хушши леçсе памасăр тытса тăраççĕ.

Çакна пула библиотекăри кĕнекесен фончĕ куç умĕнчех чакса пырать.

Районри библиотека заведующийĕ пулнă Рожнова (халĕ Крючкова) библиотека занавескине тата сĕтелне килне илсе кайнă. Унăн 217 кĕнеке 452 тенкĕ те 80 пуслăх тухман пулнă. Çакна тыраса илмен, ахалех каçарнă.

И. МОСЕЕВ.

* * *

ШАХАСАН. Районри библиотекăн ĕçĕсем кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, чылай аванланчĕç.

Анчах библиотека ĕçĕнче пĕр пысăк çитменлĕх пур, вăл—вулама илнĕ кĕнекесене вăхăтра пухса пыманни.

Хăшпĕр çынсем ик-виç çул каялла илнĕ кĕнекесене халĕ те леçсе паман. Библиотека заведующийĕ Щурукова юлташ çавăн пек çынсене ответ тытарассишĕн тăрăшмасть.

ЯКОВЛЕВ.

Çар ĕçне вĕренесси лайăхланса пырать

ШАХАСАН. Шуркасси ялсоветне кĕрекен колхозсенчи Осоавиахим членĕсене çар ĕçне вĕрентме пĕр отряд организациленĕ. Ку отряда 2 команда тата 8 группа кĕреççĕ, вĕсенче 64 çынна вĕренĕве явăçтарнă.

Кăçал призыва кĕрекен призывниксем ялсовечĕпе 15 çын шутланаççĕ. Вĕсем пурте çар ĕçне вĕренме сӳреççĕ. Призывниксем вĕренӳре малти ретре пыраççĕ, «Ворошиловский стрелок» значокĕн нормисене пачĕç.

Çар ĕçне вĕрентессине военрук Г. Иванов ертсе пырать. Отряд командирĕ пулса запасра тăракан кĕçĕн лейтенант В. Николаев, командăсен командирĕсем пулса осоавиахим членĕсем О. Ананьев тата Т. Назаров юлташсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕсене тĕплĕн тăваççĕ, занятисене лайăх хатĕрленсе ирттереççĕ.

Юлашки вăхăтра Осоавиахим членĕсенчен нумайăшĕ çар ĕçне отлично палласемпе вĕренсе пыма тытăнчĕç. А. Никитин тата Н. Степанов юлташсем вĕренӳре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Иккĕшĕ те вĕсем чи лайăх йĕлтĕрçĕсем шутланаççĕ.

В. АНТОНОВ.

Шкул участокĕнче пахча-çимĕççем ӳстеретпĕр

ШАМАРШĂ. Палтиелĕнчи вăтам шкулта вĕренекенсем шкул участокĕнче пахча-çимĕççем тата çырла йывăççисем лартма хатĕрленеççĕ. Халь шкул участокĕн планне тунă. Çак план тăрăх шкул йĕри-тавра чечексем лартма палăртнă.

Вăрлăхсем мĕнле шăтнине сăнаса пăхнă хыççăн вăрлăхсем лайăх шăтса тухни палăрчĕ.

И. Алексеев.
С. Антипов.

Колхоза кĕчĕç

КАНАШ. Çĕнĕ Ахпӳртри «Хĕрлĕ путиловец» колхоза çак кунсенче 23 хуçалăх кĕчĕç.

П. ЦАПЛИН.

Альгешри (Шупашкар районĕ) «Паха тĕрĕ» артельри тĕрĕ тăвакан цехри ударницăсем. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Галина Гордеева (сулахайра) тата Александра Филиппова Чăвашсен Государство Академи театрĕн заказĕ тăрăх «Нарспи» спектакль валли костюмсем тĕрлеççĕ.

М. Антонов фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

СУД

Бухгалтер-мошенник

Чăвашторглодоовощтрест конторинче В. А. Карсаков текенскер главнăй бухгалтер пулса ĕçленĕ. Вăл темиçе çул хушши плодоовощтрест системинче тĕрлĕ улттавлă майсемпе тата суя документсем туса государство укçатенкине çаратса пурăннă.

1939 çулти сентябрĕн 25-мĕшĕнче Шупашкарти союзплодоовощь конторин управляющийĕ пулса ĕçленĕ Р. С. Морголин, Карсаков сăмахпа каланă тăрăх, Мускава 3000 тенкĕ укçа куçарнă пулнă. Çав укçана Карсаковпа Шамсутдинов илсе хăйсен çумне чикнĕ. Çакăн хыççăн Карсаков хăйсен улттавлă ĕçне пытарас майпа авизовкăна çурса пăрахса 3000 тенкĕ укçана трест бухгалтеринче приходланă.

Тепĕр ик-виç кунтан Карсаков государство укçи-тенкине çаратас ĕмĕтпе хăйĕн юлташĕсем урлă Куйбышев хулине — Сопляков ячĕпе 1172 тенкĕ укçа куçарнă. Ку укçана та Карсаков, Гидроузел бухгалтерĕ пулнă Теплов урлă, хăй кăсъине чикнĕ. Куйбышев хулине укçа куçарнине пытарас тесе вăл инженерно-геологически партине суя счет тăратса, вĕсене банк урлă трест валли укçа куçарттарнă. 1940 çулти февралĕн 19-мĕшĕнче Карсаков гидроузел партин кассинчен 2960 тенкĕ укçа илнĕ, вăл шутран 1654 тенкине приходланă та, ытти хăй çумне чикнĕ. Çак улттавлă ĕçе Чăвашзаготснаб бухгалтерĕ И. Данилов та явăçнă пулнă.

Çапла вара Карсаков юлташĕсем пулăшнипе государство укçине мĕнпурĕ 15.408 тенкĕ çаратнă.

Чăваш АССР Верховный Сучĕн уголовнăй ĕçсене пăхакан суд коллегийĕ çак ĕçе февралĕн 18—19-мĕшĕнче пăхса тухрĕ. Суд составĕнче: председателĕ — Верховнăй суд членĕ Салагайкин тата членĕсем — халăх заседателĕсем Кукушкинпа Чапраева пулчĕç. Государство енчен айăпланă — Чăваш АССР прокурорĕн помощникĕ Быстричкин тата адвокатсем —Петровпа Архипов.

Суд коллегийĕ Василий Андреевич Карсакова, 1932 çулти августăн 7-мĕшĕнче кăларнă закон тăрăх айăпласа, 10 çуллăха хупса лартмалла, ларса тухнă хыççăн 5 çул хушши суйлав прависĕр хăвармалла тата унран Чăвашторглодоовощтрест валли 9393 тенкĕ, гидроузел валли 4.507 тенкĕ шыраса илмелле, Р. С. Морголина, малтан растратăшăн пĕр хут судпа айăпланнăскерне, 5 çуллăха хупса лартмалла тата 1500 тенкĕ шыраса илмелле; И. Данилова пĕр çулталăк та ултă уйăхлăха хупса лартмалла турĕ.

Н. КУЗЬМИН.

ТӲРЛЕТНИ

«Чăваш литературин чаплă пронзведенийĕ» ятлă статьяра («Чăваш Коммуни», мартăн 7-мĕш) корректурăллă йăнăшсем кайнă. Иккĕмĕш колонкăри 4-мĕш абзацăн юлашки предложенине çапла тӳрлетсе вуламалла: «Истори вăл — чăннипе обществăра, çĕршывра мĕн пулни, анчах илемлĕ литературăн историллĕ произведенийĕнче çырни вара — чăннипе мĕн пулни çеç те мар, чăннипе мĕн пулма пултарни те».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Капитализмлă çĕршывсенчи хĕрарăмсен пурнăçĕпе кĕрешĕвĕ

Капитализмлă çĕршывсенчи ĕççыннисем хĕрарăмĕсем империализмлă вăрçа пула халама çук нумай йывăр инкекспе асапсем тӳсеççĕ. Хальхи вăрçăра тыл тата фронт хушшинче чикĕ çук, сывлăшран тапăнса бомбăсем пăрахнине пула тылри халăх фронтри салтаксенчен сахал мар инкекссем куратъ. Хуçалăх ишĕлнин йывăрлăхĕ, апат-çимĕççем çитменни — çаксем пурте ĕççыннисем хĕрарăмĕсемшĕн асапсем кӳреççĕ.

Империализмлă вăрçа хирĕç тата вăрçă вутне чĕртекенсене хирĕç пыракан движенине хĕрарăмсем нумайрах та нумайрах хутшăнса пыраççĕ. Вĕсем вăрçа хирĕç пит нумай майсемпе протест тăваççĕ.

Англире хĕрарăмсен нумай организацийĕсем хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери куне уявлассишĕн кампани ирттереççĕ. Кампанин тĕп ыйтăвĕсем — апат-çимĕççем çителĕклĕ пама ыйтасси, товар хакĕсене йӳнетесси, хĕрарăмсене ĕç повинноçĕнчен хăтарасси. Манчестер хулинче комитет тунă, унта учительницăсем, хĕрарăм врачсем, медицина сестрисем, килхуçи хĕрарăмĕсем, промышленноçри работницăсем кĕнĕ. Рочдейльре те çавăн пек комитет тунă. Ытти нумай хуласемпе районсенче те хĕрарăмсен комитечĕсем организацилесе, унта салтак семьисен членĕсене валли отделсем уçнă.

Нумай пулмасть хăçатра профсоюз организацисен хĕрарăм комитечĕн секретарĕ çырнă статьяна пичетлесе кăларнă, вăл буржуази хĕрарăмĕсен харампырла пурнăçĕ çинчен çырнă. Вăрçă буржуази хĕрарăмĕсене пырса тивмен. Вĕсем яланах—ресторансенче е чаплă тумтирсем çĕлекен ательесенче. Ĕççыннин хĕрарăмĕсене вара вăрçă пывăрран пырса тивнĕ.

Фабрик-завод хуçисем хĕрарăмсене противник сывлăшран пырса тапăннă вăхăтра та ĕçлеттересшĕн; тревога вăхăтĕнче бомбоубежищене каякансене ĕçрен кăларса яраççĕ. Джон Энгланд фирмин пĕр отделĕнче ĕçленĕ тăватă хĕре администраци ĕçрен кăларни çинчен хут çырсах пĕлтернĕ,—«эсир хăвăра ытти персонал пек тытказлама килĕшетĕр пулсан...», вара каялла ĕçе илме ыйтса заявлени пама пултаратăр, тесе çырнă администраци.

Британăсем тăвакан «Роллс» заводра ĕçлекен хĕрсенчен хăшпĕрисем тревога вăхăтĕнче бомбоубежищене кайнă. Мастера çав хĕрсене ĕçрен кăларма хушнă.

«Ньюс кроникл» хаçат репортерĕ: салтаксен арăмĕсене укçа тӳлейменшĕн хваттертен кăларни çинчен кашни кунах хыпарсем килеççĕ, тесе çырать.

Вăрçакан çĕршывсенчи буржуази хăйне вăрçă инкекĕсенчен пит те лайăх сыхлать. Акă, çавна кăтартакан фактсенчен пĕри.

Англирен нумай ачасене Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене илсе кайма тытăнсан, пуринчен ытла аристократсен ачисене илсе кайни палăрнă. Çав ачасемпе пĕрле нянькăсемпе гувернанткăсем туллиех пулнă. Хаçат репортерĕ пĕр гувернанткăран: «Ку ачан ашшĕ мĕн ĕçлесе пурăнать? Унăн профессийĕ мĕнле?» — тесе ыйтнă. Гувернантка шăртланса: «Вăл нимĕн те тумасть: джентльмен вăл!» — тенĕ. Аристократпе буржуази ачисем хăрушăсăр çĕрте пурăнаççĕ, çав вăхăтрах Англири промышленноçлă хуласемпе портсенчи чухăнсен, рабочисен тата моряксен ачисем çине бомбăсем час-часах ӳкеççĕ.

Англири ĕçхĕрарăмĕсен активлăхĕ ӳссе пырать, вĕсем хăйсен пурнăç интересĕсене сыхласшĕн кĕрешĕве çĕкленеççĕ.

Иртнĕ çулти ноябрьте Лондонри хĕрарăмсен делегацийĕ, хĕрарăмсемпе ачасене сыхлакан нацийĕн совет организацине сыхласкер, шалти ĕçсен министерствин парламентри секретарĕпе — лейбористсен партин членĕнче тăракан Эллен Уилкинсонпа курăçса калаçасшăн пулнă. Вăл хĕрарăмсен делегацине йышăнман.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президентне суйламалли кандидат пулнă мистер Уилки Лондона пырсан, Савой отельре нуян промышленниксемпе пĕрле ирхи апат çисе ларнă, — çав вăхăтра унта хĕрарăмсен ушкăнĕ пырса кĕнĕ те демонстраци тунă. Вĕсем: «Пуянсене валли — норма тумалла!» — тесе çырнă пир сарса хунă. Вĕсем: «Рабочисене валли апатçимĕççем нумайрах парăр!» — тесе кăшкăрнă. Çавăн чухне хĕрарăмсем коммунистла листовкăсем сарнă. Демонстрацие 60—100 хĕрарăм хутшăннă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи хĕрарăмсем те кĕрешĕве çĕкленеççĕ. Вĕсем чи малтанах Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене вăрçа туртса кĕпине хирĕç кĕрешеççĕ, вăрçа пула пит пысăк услам илекен буржуазин политикине тăрă шыв çине кăлараççĕ.

1940 çулти декабрьте Нью-Йоркра пухнă вăрçа хирĕç конференцире вăрçа хирĕç пĕрлешӳсенчен, профсоюзсенчен тата ытти организацисенчен 200 делегатка ытла пулнă. Конференци хĕрарăмсен секцине организацилеме йышăннă.

1940 çулти декабрĕн 15-мĕшĕнчех Нью-Йоркра çамрăк хĕрарăмсен конференцийĕ пулса иртнĕ. Нью-Йоркри учительницăсем, вĕренекенсем, официанткăсем, телеграф служащисем, китти прислугăсем т. ыт. те çав конференцине пин ытла делегаткăсем суйласа янă. Делегаткăсем хушшинче негритянкăсем те нумай пулнă, вĕсем конференци ĕçне активлăн хутшăннă.

Францире юлашки çул хушшинче хĕрарăмсен пурнăçĕ уйрăмăнах йывăрланнă. Вишири правительство усçăнах реакцилле ĕçсем туса пырать.

Францири министрсен совечĕ йышнă закон тăрăх качча тухнă хĕрарăмсене государство учрежденийĕсене ĕçе илме чарнă тата çав закон хĕрарăмсене пурне те ĕçрен кăларма палăртса хунă. Кун хыççăн, паллах ĕнтĕ, ĕçсĕр юлнисен çарĕ пушшех нумай ӳсет. Францире хĕрарăмăн килхуçи хĕрарăмĕ пулнисĕр пуçне урăх нимĕн тумалли те çук. Шкулсенче хĕрачасене математика, физика, хими вĕрентме пăрахнă, ун вырăнне вĕсене ача пăхма тата апат пĕçерме вĕрентеççĕ.

Францири геройла компарти ĕççыннисене хĕрарăмсен прависемпе положенине сыхласшĕн кĕрешсе пырать. Вăрттăн тухса тăракан «Юманите» хаçат 1940 çулти ноябрьте Мориз Торезăн «Вĕсен политики» ятлă статьине пичетлесе кăларнă. Торез юлташ çапла çырать: «Вишире семьене хӳтлесси çинчен нумай калаçаççĕ, анчах ĕççĕр юлнисене вĕсем тахçантанпа пурăннă вырăнсенчен инçете илсе кайнă пирки çемьесем саланни çинчен калама манаççĕ. Хĕрарăмсем кил пăхчăр тата ачасем ытларах çураллăр тесе калаçаççĕ, анчах кунне 4 франкпа тата унтан та сахалтарахпа пурăнакан ĕççĕр юлнă çынсен ачисем вилсе пĕтес хăрушлăх умĕнче тăраççĕ. Çавăн пекех тата хĕрарăм кил пăхма тытăнни нумай çемьесеммĕн, арçын илекен ĕçуçипе пурăнайманнисемшĕн, çĕнĕрен асапсем туса хуни çинчен калама манаççĕ...»

Испанири хĕрарăмсем те, Франко генералăн террорла режимĕ хĕсĕрленине пăхмасăрах, тӳсĕмлĕн кĕреттеççĕ. Вĕсем, чĕретсенче тăнă чухне, Франко генералăн режимне хирĕç уçăпах протестлеççĕ.

Франко майлă çынсем халăх хушшинче тĕрлĕрен значоксем сарнипе усă курса, Мадридри хĕрсем те: «Международная Красная Помощь» — тесе çырнă пиншер значоксем сарнă. Çав ĕçшĕн арестленĕ ихĕ хĕре перре пăрахнă. Анчах политзаключенăйсене валли укçа пухма хĕрсем çапах та чăрăнман.

ОБОЗРЕВАТЕЛЬ.

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

Канашской артели „Авангард" системы Чувашпромсоюза на 1-I—41 года (в тыс. р.)

АКТИВ

Наименование статей баланса	Сумма: На 1-ое января 1940 г.	Сумма: На 1-ое января 1941 г.
Основные средства	208,6	472,8
Расходы за счет будущих периодов	—	—
Отвлеченные средства	438,6	428,9
Предметы, не относимые к основным средствам	54,0	89,2
Сырье и материалы и топл.	234,9	345,6
Производство	22,6	39,3
Готовая продукция и товары	201,0	159,5
Товары отгруженные и вып. работы	79,2	76,8
Денежные средства	52,7	36,8
Расчеты (дебиторы)	1,6	15,3
БАЛАНС	1293,2	1655,2

ПАССИВ

Наименование статей баланса	Сумма: На 1-ое января 1940 г.	Сумма: На 1-ое января 1941 г.
Фонды и резервы	410,6	621,7
Регулирующие статьи	0,1	0,6
Долгосрочные кредиты	7,0	—
Краткосрочные кредиты Госбанка	193,3	164,2
Расчеты (кредиторы)	131,2	96,1
Прибыли	551,0	772,6
БАЛАНС	1293,2	1655,2

Результаты хозяйственной деятельности (в тыс. руб.)

Убытки			Прибыли		
Убытки от реализации	74,7	31,4	Доходы от реализации	642,0	805,0
Расходы и убытки разные	26,1	10,1	Доходы разные	9,8	9,1
ИТОГО	100,8	41,5	ИТОГО	651,8	814,1
Прибыль отчетного года	551,0	772,6	Убытки отчетного года	—	—
БАЛАНС	651,8	814,1	БАЛАНС	651,8	814,1

Председатель прав. артели **Герасимов.**
Главн. бухгалтер **Борисов.**

Настоящий баланс рассмотрен и утвержден балансовой комиссией Чувашпромсоюза 8 февраля 1941 года.

Пред. балансовой комиссии **Шишкин М. С.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство конторин—0—23.

НТ2601

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 191. Ф. Б. 58×84 п. л.